Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабрĕн 30 эрнекун 299(5112) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—87, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, ял хуçалăх пайĕн — 4—97, совет строительстви пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, ялкорсен пайĕн—3—38, дежурнăйĕн — 6—23.

Ĕç дисциплинине йĕркелес, государствăн социальнăй страхованин практикине лайăхлатас тата вăл ĕçре киревсĕр ĕçсем тунине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тумали мероприятисем çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ тата Профессилĕ Çойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Совет Сойузĕнче ĕçсыннисем капиталиссемшĕн мар, хăйсемшĕн, хăйсен социалисăмлă государствишĕн, пĕтĕм халăх ырлăхĕшĕн ĕçлеççĕ. Предприйатисенче, транспартра, учреждениссенче рабочисемпе служăщчисен нумайлă ытларахăшĕ тÿрĕ, ырă кăмăлпа ĕçлеççĕ, ĕç çине айланулă пăхнине палăртаççĕ, ударничествăн тата ĕçри паттăрлăхпа хастарлăхăн образецĕсене кăтартса параççĕ, тăван çĕршывăн вăй-хăватне тата оборонăн тĕрекне çирĕплетсе пыраççĕ.

Анчах тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен работниксемпе пĕрлех тата айланулă мар, кайа йулнă йе тÿрĕ кăмăллă мар уйрăм çынсем—летунсем, кахалсем, прогульщиксем тата рвачсем пур-ха.

Çак çынсем хăйсем тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеменнипе, прогулсем тунипе, ĕçе кайа йулса тухнипе, ĕç вăхăтĕнче предприйати тăрăх пĕр тĕллевсĕр уткаласа çÿренипе тата ĕçĕн шалти йĕрке правилисене итти майсемпе пăснипе, çавăн пекех тата час-часах хăйсен ирĕкĕпе пĕр предприйатирен теприне куçа-куçа çÿренипе ĕç дисциплинине пăсаççĕ, промышленнăça, транспарта тата пĕтĕм халăх хуçалăхне пысăк сийен кÿреççĕ.

Вĕсем государствăна сахалрах ĕçлесе пама, хăйсем валли вара нумайрах укçа хăйпăтса илме тăрăшаççĕ. Вĕсем совет саккунĕсемпе тата ĕç çинчен калакан правилăсемпе киревсĕрле ĕççем тăваççĕ, вĕсемпе хăйсен интересĕсемшĕн çеç усă кураççĕ.

Вĕсем ĕçкунĕн палăртса панă сехечĕсене те туллин ĕçлесе ирттермеççĕ, сайра-хутра мар пурĕ те 4 йе 5 сехет çеç ĕçлеççĕ, ĕçкунĕн ытти ик-виç сехетне ахалех çухатаççĕ. Çакна пула йитĕ халăх тата государствă çулсеренех мĕл-йуншар ĕç кунĕ тата миллиардшар тенкĕ çухатаççĕ.

Рвачсемпе кахалсене ĕçрен кăларса йарсан, вĕсем кутăнласа судлашма тытăнаççĕ, вара, ĕçлемесĕрех, ирĕксĕрех ĕçлемесĕр вăхăт ирттермеле пулнăшăн имĕш хăйсене тÿлеттермеле тăваççĕ. Ĕç дисциплинине пăснăшăн предприйатисенчен кăларса йани, правилă пекех, прогульщиксемшĕн мĕн чухлĕ те пулин чăн-чăн наказани пулса тăмасть, мĕншĕн тесен нумай тĕлсенче вĕсем çийĕнчех ытти урăх предприйатисенче ĕçе кĕрсе вырнаçаççĕ.

Отпусксем памали çинчен калакан хальхи вăхăтри правилăпа усă курса, — вăл правилă тăрăх предприйатире йе учреждениере пилĕк уйăх çурă ĕçлевĕ хыççăн отпуск илмели права параççĕ,—летунсемпе кахалсем, пĕр предприйатирен тепĕр предприйатине куçа-куçа çÿресе, çулталăк хушшинче икшер отпуск илме май тупаççĕ. çапла вара тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен рабочисемпе служăщчисенчен лайăхрах положенире пулаççĕ.

Савăтсемпе хапрăксем хăйсен рабочийĕсемпе служăщчийĕсем валли тунă çуртсенчи хватерсене сайра-хутра мар çав предприйатисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнă йе ĕç дисциплинине пăснăшăн кăларса йанă çынсем йышăнса тăраççĕ, çакна пула вара пĕр предприйатире нумай вăхăт тата тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен рабочисемпе служăщчисем час-часах хăйсене кирлĕ хватерсĕр пурăнаççĕ.

Каву çурчĕсемпе санаторисене каймали путовкăсене валеçсе панă чухне летунсемпе прогульщиксем тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен рабочисемпе служăщчисем усă куракан правасемпех усă кураççĕ. Çавăн пекех тата вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă пирки страховой пособисем тÿлевĕ чух та, çавăн пекех пенсисем памала тунă чух та пĕр-пĕр предприйатире йе учреждениере нумай вăхăт хушши татти-сыпписĕр ĕçлевĕ тÿрĕ кăмăллă работниксемпе ĕç дисциплинине пăсакансем—пĕр предприйатисемпе учреждениссенчен теприсене куçса çÿрекен летунсем хушшинчи уйрăмлăха кирлĕ пек çивĕччĕн палăртмаççĕ.

Хăшпĕр профсойуз, хуçалăх, çавăн пекех суд органĕсем те ĕç дисциплинине пăсакансене чарманнипе халăха хирĕçле тÿсме çук ĕç тунине палăртаççĕ тата,—халăхна государствă интересĕсем çине пăхмасăрах,—вĕсем майлă та пулаççĕ, кайала ĕçе илмеле тăвасси çинчен, вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă пирки пособисем тÿлесси çинчен, савăтсен хватерĕсенчен кăларса йарасси çинчен т. ыт. çинчен тăракан ыйтусене час-часах летунсемпе прогульщиксене усăлă пулмала майлăн татса параççĕ.

Çаксем пурте йитĕ çакăн пек положени патне илсе пыраççĕ: тÿрĕ кăмăлпа ĕçлемен работниксем, сахал ĕçлесех, государствă шучĕпе халăх шучĕпе пурăнма пултараççĕ, çапла пулнине хирĕç рабочисемпе служăщчисен ытларахăшĕ тĕрĕссипе протест тăвать тата ĕçĕн шалти йĕркин хальхи вăхăтри правилисене тата социальнăй страхованин нормисене хăшпĕр улăштарусем кĕртме хушать, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен работниксем çине тата кахалсем, летунсем çине пĕр пекех пăхассине малашне пĕтерсе лартмала тума, ĕç дисциплинине пăсакан тата çăмăллăхах пĕр предприйатирен тепĕр предприйатие куçса çÿрекенсене мар, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен рабочисемпе служăщчисене кăна хавхалантармала тума хушать.

Йăвăр çын пулнă пирки тата ача çуратнă пирки паракан отпусксемпе усă курнин практикинче те нумай киревсĕр ĕççем тунине пур. Хăшпĕр хĕрарăмсем, государствă шутĕнчен ултавлă майпа укçа хăйпатса илме тăрăшакансем, государствă шутĕнчен тăватă уйăхлăх отпуск илес те кайран вара ĕçе урăх тухас мар тесе, ача çуратас умĕн кăшт маларах çеç предприйатисемпе учреждениссенче ĕçе кĕнĕ фактсем те сайра мар. Государствă интересĕсем çак киревсĕр ĕçсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе лартма хушаççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ тата Профессилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ—çапла йышăнаççĕ:

1. Предприйатисемпе учреждениссен администрацине профсойуз органĕсемпе пĕрле çакна тума хушас: ĕç дисциплинине тата ĕçĕн шалти йĕрки правилисене пăсакан пĕтĕм çынсене хирĕç, прогульщиксене, кахалсене, рвачсене, хăйсен ĕçри обйазанийĕсем çине тÿрĕ кăмăлпа пăхман пĕтĕм çынсене,—вăл йе служăщи йе рабочи пултăр, вĕсене хирĕç тăтăклăн кĕрешсе пымала.

Вырăнсăр сăлтавпа прогул тунă рабочине йе служăщчине саккун ĕçрен кăларса йама хушать. Çак мерă вăл ĕçлеме йуратман, государствă шучĕпе, халăх шучĕпе пурăнма тăрăшакан хăрампырсене хирĕç пырать. Саккун прогульщиксене ĕçрен кăларса йарасси çинчен лартнă требованине çийĕнчех пурнăçа кĕртсе пымала.

Ĕç условийĕсене кура тĕрлĕ предприйатисемпе учреждениссем валли саккунпа 8 сехетлĕ ĕçкунĕ, 7 сехетлĕ ĕçкунĕ, 6 сехетлĕ ĕçкунĕ тунă, ăна рабочи клас йышăннă. Рабочисенчен нумайрах ытларахăшĕ 7 сехетлĕ ĕçкунĕпе ĕçлет. Саккунпа туса çирĕплетнĕ ĕçкунĕн вăрăмăшне тĕп-тĕрĕс тата пĕр нимĕн пăсмасăр пурнăçа кĕртсе пымала, 8 сехетлĕ, 7 сехетлĕ йе 6 сехетлĕ ĕçкунĕ туса çирĕплетнĕ çĕрте, саккун тăрăх, 8, 7 тата 6 сехет хушши туллийĕн ĕçлемеле, государствă çакăн пек требовани лартать тата рабочи клас вăл требованишĕн тăрать. Ĕçе кайа йулса тухни, вăхăт çитмесĕрех кăнтăрлахи апата тухса кайни, кăнтăрлахи апатран кайа йулса килни, предприйатирен вăхăт çитмесĕрех тухса кайни, çавăн пекех тата ĕç вăхăтне ĕçлемесĕр ирттерни—çаксем пурте йитĕ ĕç дисциплинине пысăккăн пăсни, саккуна пăсни пулаççĕ, вĕсем çĕршыв хуçалăхĕпе оборонин хăватне тата халăх пурнăçĕн ырлăхне хавшатаççĕ.

Вырăнсăр сăлтав пулман çинчех ĕçе вăхăтра тухман, йе вăхăт çитмесĕрех кăнтăрлахи апата тухса кайнă, йе кăнтăрлахи апатран ĕçе вăхăтра çитмен, йе вăхăт çитмесĕрех предприйатирен йе учреждениерен тухса кайнă, йе ĕç вăхăтне ĕçлемесĕр ирттернĕ рабочи йе служăщчи çине администраци взыскани хурать: замечани тăвать йе выгăвăр парать, йе ĕçрен кăларса йарасси çинчен асăрхаттарса выгăвăр парать; 3 уйăха çити срукласа урăх ĕçе, сахалрах тÿлекен ĕçе куçарать, йе пĕчĕкрех должнăçа куçарса лартать.

Ĕç саккунне тата ĕç дисциплинине пĕр уйăх хушшинче вĕçĕмренех 3 хутчен йе 2 уйăх хушшинче 4 хутчен пăснă рабочисене йе служăщчисене, прогульщик вырăнне, ĕç çинчен тата ĕç дисциплини çинчен калакан саккуна пăсакан вырăнне хурса ĕçрен кăларса йараççĕ.

2. Ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе мерăсем йышăнассинчен пăрăннăшăн тата прогульщиксене, летунсене, разгильдяйсене хирĕç çак постановленире тата «Нимĕн сăлтавсăр прогул тунăшăн ĕçрен кăларасси çинчен» ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1932 çулти нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановленире (Собрание Законов СССР 1932 года №78, ст. 475) кăтартнă пек мерăсем йышăнманшăн—предприйатисен, учреждениссен, цехсен тата ытти руководителĕсене çÿлте тăракан органĕсем ĕçрен кăларас тата суда парса айăплас тăрăх ответ тыттармала тăвас.

3. Рабочисемпе служăщчисен хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен тухнă чухне çакăн çинчен предприйатисемпе учреждениссен администрацине пĕр уйăх малтан асăрхаттармала.

4. Рабочине йе служăщчине çителĕксĕр сăлтавпа ĕçрен кăларсан, ирĕксĕр прогул тунăшăн вăтам ĕçукçи шучĕпе, анчах та 20 куншăн ытла мар тÿлеççĕ, предприйатисемпе учреждениссен администраци, местком, расценкăпа конфликт комиссийĕсен ĕçрен тĕрĕс мар кăларни çинчен панă жалăбăсене вĕсем килнĕ хыççăн виçĕ кун хушшинче, суд органĕсенче—пилĕк кун хушшинче пăхса тухмала.

5. Професилĕ сойуз членĕнче тăракан рабочисемпе служăщчисене вăхăтлăха ĕçлейми пулнă шутпа паракан пособисене (йăвăр çын чухне тата ача çуратнă хыççăн паракан пособисене шутламасăр) çав предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр ĕçленин стажне кура çакăн чухлĕ тÿлеççĕ:

а) Пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр 6 çул ытларах ĕçлекене ĕçукçин 100 процентне;

б) Пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр 3 çултан пуçласа 6 çула çитиччен ĕçлекене — ĕçукçин 80 процентне;

в) Пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр 2 çултан пуçласа 3 çула çитиччен ĕçлекене—ĕçукçин 60 процентне;

г) Пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр 2 çул таран ĕçлекене—ĕçукçин 50 процентне.

6. Професилĕ сойуз членĕнче тăракан, 18 çула çитмен çамрăксене 5-мĕш статйара кăтартнă пособисене—çав предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр мĕн чухлĕ вăхăт ĕçленине кура, çак виçепе тÿлеççĕ: татти-сыпписĕр 2 çул ытла ĕçлекене ĕç укçин 80 процентне, икĕ çул таран ĕçлекене ĕçукçин 60 процентне. Кунта тата çав предприйатире татти-сыпписĕр ĕçленĕ стаж шутне хапрăк-савăт ученичествин шкулĕнче вĕреннĕ вăхăта та кĕртеççĕ.

7. Кăмрăк промышленнăçĕн çĕр айĕнче ĕçлекен работникĕсене — професилĕ сойуз членĕсене, кăмрăк каларнă йе шахтăра хатĕрлевÿлĕ ĕçре ĕçлекенсене, 5-мĕш статйара кăтартнă пособисене çав шахтăра татти-сыпписĕр мĕн чухлĕ вăхăт ĕçленине кура çак виçепе тÿлеççĕ: татти-сыпписĕр 2 çул ытла ĕçлекене ĕçукçин 100 процентне, 2 çул таран ĕçлекене ĕçукçин 60 процентне.

8. 1933 çулти йанварĕн 1-мĕш хыççăн ĕçе кĕнĕ савăтсемпе хапрăксенче рабочисене тата служăщчисене—професилĕ сойуз членĕсене, çав предприйатисене 1936 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен кайран мар ĕçлеме кĕнĕ тата унта татти-сыпписĕр ĕçлекенсене вăхăтлăха ĕçлейми пулнă шутпа паракан пособисене (йăвăр çын тата ача çуратнă хыççăн паракан пособисене шутламасăр) çав предприйатире татти-сыпписĕр мĕн чухлĕ ĕçленине кура çак виçепе тÿлеççĕ: татти-сыпписĕр 5 çул ытла ĕçлекене — ĕçукçин 100 процентне, 3 çултан пуçласа 5 çула çитиччен ĕçлекене—ĕçукçин 80 процентне. Çак предприйатисенчи рабочисемпе служăщчисене — 3 çултан кайа мар татти-сыпписĕр ĕçлекенсене вăхăтлăха ĕçлейми пулнă шутпа паракан пособисене çак постановленин 5-мĕш статйинче тунă йĕрке тăрăх тÿлеççĕ.

9. Професилĕ сойуз членĕнче тăман рабочисемпе служăщчисене вăхăтлăха ĕçлейми пулнă шутпа паракан пособисене (йăвăр çын тата ача çуратнă хыççăн паракан пособисене шутламасăр) сойуз членĕсемшĕн тунă нормăна танлаштарсан çур хисепне тÿлеççĕ.

10. Вăхăтлăха ĕçлейми пулнăшăн пособисем памала тунă чухне рабочи йе служăщчи хуçалăх органĕн йе учреждени администрацин распоряженийĕ тăрăх пĕр предприйатирен йе учреждениерен тепĕр çĕре куçни те çавăн пекех татти-сыпписĕр ĕçленĕ стаж шутланать.

11. Ĕç дисциплинине пăснăшăн преступлени тунăшăн ĕçрен кăларса йанă, çавăн пекех хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен тухнă рабочисемпе служăщчисем ĕçĕн çĕнĕ вырăнĕнче вĕсем 6 уйăхран кайа мар ĕç тесен çеç вăхăтлăха ĕçлейми пулнă шутпа паракан пособисем илме права илеççĕ. Ку правилă çак постановлени пичетленсе тухиччен ĕçрен кăларнă, йе хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен тухса кайнă рабочисемпе служăщчисене тивмест.

12. „Хуласенче пурăнмали çуртсен фондне сыхласа усрасси тата пурăнмали çуртсен хуçалăхне лайăхлатасси çинчен" ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти октйабĕрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановленин 31-мĕш статйи тăрăх (Соб. Зак. СССР 1937 г. № 69, ст. 314) рабочисемпе служăщчисем хăйсем çав предприйатире ĕçленĕ май государствă предприйатин, учрежденин, йе общественнăй организацин çуртĕнче йе тата çав предприйатисем тара илнĕ çуртра пурăнма çурт илнĕ пулсан, çак постановленине пичетлесе кăларнă хыççăн, хăйĕн ирĕкĕпе предприйатирен тухса кайнисене йе ĕç дисциплинине пăснăшăн, çавăн пекех преступлени тунăшăн ĕçрен кăларнисене вунă кун хушшинчи срукра администрацилĕ йĕркепе обйазательнăй хватертен кăларса йамалла.

13. Рабочисемпе служăщчисене черетлĕ отпуск илмели правана çав пĕр предприйатире йе учреждениере 11 уйăх хушши татти-сыпписĕр ĕçленĕ хыççăн параççĕ.

14. Çулсеренех памала туса çирĕплетнĕ отпускăр пуçне работницăсене тата хĕрарăм-служăщчисене, вĕсем йăвăр çын пулнă йе ача çуратнă тĕлсенче, çуратиччен календарлă 35 кунлăх тата çуратнă хыççăн календарлă 28 кунлăх отпуск параççĕ, çак тапхăршăн вĕсене халиччен туса çирĕплетнĕ виçе тăрăх государствă шутĕнчен пособи тÿлеççĕ. Çаканта кăтартнă отпуска тата йăвăр çын пулнă пирки, ача çуратнă пирки памали пособисене çав предприйатире (учреждениере) пĕр таталмасăр 7 уйăхран кайа мар ĕçленĕ çынсене параççĕ тата тÿлеççĕ.

15. Çав предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр 2 çул ытла ĕçленĕ рабочисемпе служăщчисене каву çурчĕсене каймали путовкăсем илме ыттисенчен пысăкрах права параççĕ.

16. Вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă пирки (чирлевĕ, йăвăр çын пулнă, ача çуратнă пирки т. ыт. те) панă, çак постановлени пичетлесе кăларичченех пĕтеймен отпусксемшĕн отпуск пуçламĕшĕнче пулнă правилăсем тăрăх тÿлеççĕ.

17. Тара тытса ĕçлеттерекен уйрăм çынсем патĕнче ĕçлекен рабочисем (килти работницăсем, концессилĕ предприйатисенчи рабочисемпе служăщчисем) тĕлĕшпе илсен, çак постановленире кăтартса хунă ыйтусене йатăрласах кăларнă уйрăм правилăсем тăрăх йĕркелесе пыраççĕ, вăл правилăсене Професилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ кăларать, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетет.

18. I-мĕшпе II-мĕш группăри (чирленипе пулнă) ĕç инвалидĕсене, вĕсем пенси ыйтас умĕн пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр стажпа ĕçленĕшĕн, пенсине çапла хушса параççĕ:

Категорисем	Татти-сыпписĕр ĕçленин стажĕ	Халиччен пулнă пенси çумне хушса памалли (%)
1-мĕш категори — çĕр айĕнчи ĕççе тата сийенлĕ ĕççе çакăн чухлĕ ĕçленĕ рабочисемпе служăщчисем:	3 çултан 5 çул таран	10 проц.
	5 çултан 10 çул таран	20 проц.
	10 çул ытла	25 проц.
2-мĕш категори — металлурги, машиностройени, електротехнически, çĕр айĕнчи, горноруднăй, нефть, основной химически тата резин промышленнăçĕнчи, чугун çулпа шыв çул транспортĕнчи, сыхăнун производствăлăх предприйатийĕсенчи рабочисемпе служăщчисем	4 çултан 8 çул таран	10 проц.
	8 çултан 12 çул таран	15 проц.
	12 çул ытла	20 проц.
3-мĕш категори — ытти рабочисемпе служăщчисем	5 çултан 10 çул таран	10 проц.
	10 çултан 15 çул таран	15 проц.
	15 çул ытла	20 проц.

Пенси ыйтас умĕн пĕр предприйатире йе учреждениере татти-сыпписĕр стажпа 5 çул ытла ĕçленĕ пенсионерсене санаторисемпе курортсене йама пенсионерсем валли уйăрса хуракан путовкăсене илме ыттисенчен пысăкрах права параççĕ.

19. Рабочисемпе служăщчисене инвалидăç пирки памали пенсисене вĕсен ĕç стажĕ çакăн чухлĕ пулсан памала тăваççĕ:

Мĕн çулта	СТАЖ: Арçынсен	Хĕрарăмсен	Çĕр айĕнче ĕççенче тата сывлăхшăн сийенлĕ ĕçсенче ĕçлекенсен
20 çултан 22 çул таран	3	2	2
22 çултан 25 çул таран	4	3	3
25 çултан 30 çул таран	6	4	4
30 çултан 35 çул таран	8	5	5
35 çултан 40 çул таран	10	7	6
40 çултан 45 çул таран	12	9	7
45 çултан 50 çул таран	14	11	8
50 çултан 55 çул таран	16	13	10
55 çултан 60 çул таран	18	14	12
60 çул ытла	20	15	14

Çын 20 çула çитиччен инвалид пулса тăнă тĕлсенче, çавăн пекех тата ĕçре сурантаннипе тата професилĕ чирпе инвалид пулса тăнă тĕлсенче стаж мĕн чухлĕ пулнине пăхмасăрах пенси памала тăваççĕ.

20. Хăйсене ватăлăх пирки пенси памала тунă хыççăн та ĕçлеме пăрахман пенсионерсене, çав пенсисене вĕсем ĕçукçа илнине пăхмасăрах тÿлеççĕ.

I-мĕшпе II-мĕш группăри инвалидсем инвалидсен кооперацийĕн ертелĕсем килте тума панă ĕçсене туса уйăхне 100 тенкĕрен ытла мар ĕçлесе илеççĕ пулсан, вăл ĕçукçине шута илмеççĕ; çак инвалидсем ĕçукçи уйăхне 100 тенкĕрен ытларах пулнă тĕлсенче пенси ĕçукçи пысăкĕшне кура пĕчĕкленет, анчах инвалид пенсине 50 процентран кайа мар илсе тăмала пулать.

21. Пенсионерсене татти-сыпписĕр стажпа ĕçленĕшĕн хушса тÿлемеле тунă май тата пенсионерсен ĕçукçине учота илсе тĕлĕшрен льготăсем памала тунă май (çак постановленин 18-мĕшпе 20-мĕш статйисем)—пур тĕрлĕ пенсисем тăрăх тата инвалидлăхăн пур групписем тăрăх та хушса тÿлемеле тунисемпе перерасчетсем. Социальнăй Страхованин Сойузлă Совечĕ 1932 çулти февралĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 47-мĕш №-лĕ постановленин 4, 6, 8, 13, 19 тата 20-мĕш статйисенче туса çирĕплетнĕскерсем пăрахса тухаççĕ.

Халиччен шутласа хунă надбавкăсем малтанхи виçепех сыхланса йулаççĕ.

22. Хăйсем ĕçлесе илнине йе ытти дохочĕсене, пенси тÿленĕ чухне учота илмелескерсене, социальнăй обеспечени органĕсенчен пытарса тăракан пенсионерсене 6 уйăх хушши пенси памала мар тăваççĕ.

23. ССР Сойузĕнче пенсине пысăккăн парса пулнăшăн хушăрах, нумай çул каçарах пенси нормисемпе ĕçукçи хальхи вăхăтринчен чылай пĕчĕкрех пулнă вăхăтра пенси çине куçнă пенсионерсем пур, çакна май государствăн социальнăй страхованийĕ тăрăх паракан пенсисен виçи, вĕсене хăш вăхăтра памала тунине пăхмасăр, уйăхне çакăнтан пĕчĕкĕ мар пулмала тăвас (вăл шута пур надбавкăсем те кĕреççĕ):

ПЕНСИОНЕРСЕН КАТЕГОРИЙĔСЕМ	Çемйере ĕçлеме пултарайман членсем çук пулсан	Çемйере ĕçлеме пултарайман членсем 1 çын пулсан	Çемйере ĕçлеме пултарайман членсем 2 йе ытларах пулсан
Ватăлăх пирки йе нумай çулсем хушши ĕçленĕ пирки пенси илекен пенсионерсем тата I-мĕш группăри инвалидсем	50 тенкĕ	60 тенкĕ	75 тенкĕ
II-мĕш группăри инвалидсем	40 „	50 „	60 „
Тăрантарса усраканĕсĕр йулнă çемйесем	—	30 „	40 „

III-мĕш группăри инвалидсемпĕн государствăн социальнăй страхованийĕ тăрăх паракан пенси виçи уйăхне 25 тенкĕрен кайа пулмала мар.

24. Предприйатисенче йе учреждениссенче ĕçлемен тата государствăн социальнăй страхованийĕпе пенсисемпе пособисем илсе тăракан инвалидсене укçа тÿлес, çавăн пекех—вăл пенсионерсене санаторисемпе курортсене йарса сыватма кирлĕ расхутсене социальнăй обеспечени органĕсем государствăн социальнăй страховани укçа-тенкĕ шутĕнчен туса пыраççĕ.

25. Çак постановленине пурнăçа кĕртнĕ май государствăн социальнăй страховани йĕне перекетленĕ укçа-тенкĕ професилĕ сойузсен пĕтĕмпех рабочисем, служăщчисем валли пурăнмали çуртсем, ача йăслисем ле сачĕсен строительствине, правительствă çав строительствăсем валли уйăрнă укçа сумне хушса памала.

26. Çак постановлени 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пурнăça кĕрет.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ В. МОЛОТОВ.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитет Çекретарĕ И. СТАЛИН.

Професилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн Çекретарĕ Н. ШВЕРНИК.

1938 çулти декабрĕн 28-мĕш.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренекенсене пулăшмала

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине Йĕпреç районĕнче кашни пуçламĕш парторганизацинче тата районри коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе явнă. Халĕхи вăхăтра партири тата партире тăман большевиксем чылайăшĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" харпăрхăй тĕллĕн вĕренме тытăнчĕç. Вĕсем ПСК(б)П райкомĕсенчен пысăк пулăшу кĕтеççĕ. Анчах пулăшу парассине çителĕклĕ организацилемен-ха.

ПСК(б)П райкомĕ вунă лектăр, вунă консультант уйăрнă. Декабĕр, йанвар тата февраль уйăхĕсенче 14 лекци пулмала. Халĕ пĕр лекци кăна иртернĕ. Лекци итлеме хăшпĕр коммунистсем 20—30 çухрăмран çынă. Пурĕ 300 çынна йахан пуçтаранчĕç.

Халĕхи вăхăтра парткабинет харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсем валли парти историн учебникне 45 екземплăр илсе хатĕрленĕ тата хаçатсем, журналсем, илемлĕ литератури пур.

Хăшпĕр коммунистсем парти историне харпăрхăй тĕллĕн авал вĕренсе пыраççĕ. Акă, Стуриков йулташ „ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн" 4-мĕш сыпăкне вĕренме тытăннă ĕнтĕ, çамрăк коммунис Зубав йулташ та хăй тĕллĕн вĕренет. Агроном Баранăв партине кăçал кĕнĕ. Вăл „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн" 3-мĕш сыпăкне вĕренме тытăннă. Вăл час-часах ăнланман ыйтусемпе консультаци илме тăрăшать.

Консультаци парас тĕлĕшпе парткабинет начар ĕçлет-ха. Докладсем, лекцисем, калаçусем сахал пулаççĕ. Кĕнекесем вулама тата конспектсем çырма вĕрентни çук. Кирлĕ литературăсен ыйтăвне организацилемен.

Парти вĕренĕвне йĕркелесе йарассине комсомолецсем хушшинче те организацилемелле. ПСÇЛКС райкомĕнче ĕçлекенсем: «пире Обком нимĕнле кăтарту та паманха, шалт аптрарăмăр, тем тумалла» тесе лараççĕ. Ку ĕçре ПСК(б)П райкомĕ те пулăшмасть.

«ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне» кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен» Тĕпком йышăннă постановлени тăрăх ĕçе организацилесе йамалла, вăл ответла ĕçе йертсе пымалла.

С. Маркийанăв.

Штатра таман инструктăрсем

ПСК(б)П Сентервăрри районĕнчи организацийĕ 1938 çулта партин кандидатне 46 çын илчĕ, кандидатран членна 26 çын куçарчĕ, сочувствующисене 30 çын илчĕ. Паллах, парти ретне çĕнĕрен хутшăннă çынсем хушшинче партин революциллĕ теорине вĕрентес ыйтăва çивĕччĕн лартмалла. Парти ретне кĕнĕ йулташсем пурте хăйсем умне большевизма вĕренес задача лартрĕç. Парти райкомĕн вĕсене кирлĕ пулăшусем кăтартусем парса тăмалла. Ку ĕçе райкомăн штатра тăракан инструктăрсем урăх çĕç туса пыма хентерех. Çапала та ПСК(б)П Сентервăрри райкомĕ хăй кашни участка çумнех штатра таман тахтшар инструктăр çирĕплетрĕ.

Парти райкомĕ штатра таман инструктăрсемпе канашлу туса иртерчĕ. Канашлура инструктăрсем çитес вăхăтра йĕпле ĕçлесе пымалине палăртрĕç.

Н. Кайахăв.

Комсомол билетне лайăх сыхламала

ТРАК. Комсомол билетне лайăх сыхласа усрасси комсомолецăн елементарлă обйазанноçĕ, дисциплинан пĕр пайĕ пулса тăрать. Анчах хăшпĕр комсомолецсем çакна час-часах манса кайаççĕ, комсомол билетне сыхласси çине сăмаллăн пăхаççĕ.

Тельман йачĕпе тăракан колхозри комсомолка Журавлёва йулташ хăйĕн билетне Шупашкартан таврăннă чух Самуккассине хватере кĕрсен çухатса хăварнă. Хватер хуçисем билетне пырса илме темиçе калаçа йапа пулин те, Журавлёва йулташ кайса илмен. Анчах çухатнă билетсене тупакансем хушшинче час-часах тÿрĕ мар шухăшлă çынсем те пулаççĕ. Ун пеккисем тупнă билета пырса илме чĕнме çеç мар, пайăх сыхланă вăхăтра касăрапах та çакалатаççĕ. Çав майпа хăшпĕр чух комсомол билечĕне халăх тăшманĕсем хăйсен преступлениллĕ ĕçĕнче усă кураççĕ. Çакăнпа та билет çухатни вăл комсомол умĕнче пысăк преступлени пулать.

Çак çул хушшинче Трак районĕнче вăтăр комсомолец ытла хăйсен билечĕсене çухатнă. Комсомол райкомĕн çакăнтан пысăк урок тумала.

Комсомол хуçалăхне йухăнтарасси тăшманăсен сăтарлă ĕçĕ пулнă. Комсомол хуçалăхĕнче те халăх тăшманĕсен сăтарлă ĕçĕн йулашкисене пĕтерессишĕн вăрлăн кĕрешмелле. Кашни комсомолеца хăйĕн билетне куç шăрçине сыхласа усрама вĕрентмелле.

А. Киселёв.

Вĕренÿ отличникĕсем комсомола кĕреççĕ

Мăн Йăмашри (Хĕрлĕ-Чутай районĕ) комсомол организацийĕ тулли мар вăтам шкулта вĕренекен 12 пионера комсомол ретне илчĕ. Вĕсем пурте вĕренÿ отличникĕсемпе ударникĕсем.

Комсомола кĕме хатĕрленекенсем татах та пур. Заявлени пама хатĕрленекенсем хăйсен йапăх отметкисене пĕтерессишĕн тăрăшса вĕренеççĕ.

Г. Толмачевский.

Районри йалхуçалăх выставки

ПЕЛЧЕК. Колхозсем кăçал вăйлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ÿстерес ĕçре тунă хăйсен çĕнтерĕвĕсене декабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ районри выставкăра уççăнах кăтартса пачĕç. Кăçал колхозсем агротехникă кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыншпе тырпул начарах туса илмерĕç. Акă, «Хĕрлĕ хĕвелтухăç» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнере йахăн тĕштырă пуçтарса илнĕ. Ленин йачĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа гектартан 15-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Çакнашкал примерсене тата нумай кăтартса пама пулать.

Районра ĕнесĕр хуçалăхсем сахалланса пыраççĕ. Хаклă колхозниксем хăйсен выльăхĕсене ăратлантарса, вĕсенчен ытларах тупăш илме тăрăшаççĕ. Патрекелĕнчи М. Плотникăв ĕлĕкхи вăхăтра чухăн пурăннă. Вăл ĕне выльăх усрама пултарайман. Колхоза кĕрсе, тÿрĕ кăмăлпа ĕçленипе кăна пуйан та çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакан пулчĕ. Плотникăв ăратлă ĕне усрать. Кăçал вăл хăйĕн ĕнинчен 5.560 литăр сĕт суса илнĕ.

Хăшпĕр колхозсем пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илчĕç. «Осоавиахим» колхоз гектартан икĕ пин арбуз, вăйлă тухăçлă купăста, сухан, выльăх кăшманĕ туса илнĕ.

Пелчĕк районĕнчи колхозсем кăçал йалхуçалăхĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Вăл çитĕнÿсене çирĕплетсе, çитес çулта тата та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешĕве тивĕçлипе сарса пырас пулать.

А. Палашкин.

Кĕрешÿ сарăлса пырать

Маттăри (Шăхасан р.) «Çамрăк колхозник» колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ хамăр республикăри колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илесси çинчен партипе правительство йышăннă постановленине тата Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине пысăк хавасланса сÿтсе йаврĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем пухура 1939 çулти çуракине тĕплĕн хатĕрленĕ пыма, бригадăсем тата колхозниксем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва, стахановла йухăма анлăн сарса пыма пулчĕç. Çакăн хыççăн бригадăсенче çуракине хатĕрленес, вăйлă тырпулшăн кĕрешÿ анлăн сарăлса пыма тытăнчĕ.

Тырпул тухăçлăхне ÿстерес çĕрте суртлă вăрлăхсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çакна «Çамрăк колхозник» колхоз членĕсем тĕрĕс ăнланса илнĕ. Чи малтан çитес çулта акса хăварма çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрлерĕç. Вĕсене тасатса, суртласа хучĕç. Вăрлăх участкисене акма чи лайăх суртлă вăрлăхсем хатĕрленĕ.

Бригадăсем хушшинче çĕре çемçетмелли пыранти йапаласене ытларах хатĕрлессишĕн ăмăртаççĕ. Ку вăхăтчен пурĕ 1790 лав çĕрĕк тапри, 1180 лав тиселĕк уйа кăларнă. Çавнашкалах колхозниксем кĕл пухаççĕ. Уйра 50 гектар çинче йур тытса купалантарма хатĕрленнĕ. Йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтернĕ.

Ник. Йакăвлĕв.

Трактăриссен курсĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхоз шкулĕ çумĕнче трактăриссен 4 уйăхлăх курсĕ ĕçleme тытăнчĕ. Курсра 75 çын вĕренет. Курсантсем пĕр-перинпе ăмăртса вĕренеççĕ.

И. Сигайĕв.

Учитĕлсен йанварти канашлăвĕсем умĕн

Вĕренекенсем каникула саланнă хыççăн, учитĕлсен районри канашлăвĕсем пулса иртеççĕ.

Çав канашлусене хатĕрленнĕ май, чи малтан вĕренÿ çулĕн 1-мĕш çуррăулăхĕнче тунă ĕçсене пăхса тухмалла. Кашни учитĕл хăйĕн педагогикăлă дневникне тата ĕçре çырса пынисене тимлĕн тĕреслесе тухса, хăй ĕçĕнчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене палăртать. Унăн ĕçĕ программăпа тата производствăлă планпа килĕшсе пырать-и, материалсем мĕнле вырнаçса пынă, вăхăта сехетсем тăрăх тĕрĕс валеçнĕ-и, учитĕл ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме мĕнле хăнăхтарса пырать, вĕренсе иртернине аса илес ĕçе мĕнле йĕркеленĕ, çыру ĕçĕсене тĕрĕс туса иртернĕ-и тата ытти çакнашкал ыйтусем тăрăх учитĕлĕн пĕтĕм ĕçе тĕплĕнчесе анализ туса тухмала.

Класри ĕçре воспитани ĕçĕ пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçли пурнишĕн те паллă. Ку ĕç мĕнле пулса пынине уйрăмах тимлĕн пăхмала.

Совет учитĕлĕсем хăйсен хушшинчен педагогикăлă ĕçĕн маçтăрĕсене çулран-çул ытларах ÿстерсе пыраççĕ. Педагогикă ăсталăхне алла илнĕ маçтăрсем вĕренекенсене тарăн та çирĕп пĕлÿ тата коммунисла воспитани парса çитĕнтереççĕ.

Пирĕн задача — пур учитĕлсене те çакăн пек маçтăрсем тăвасси. Пирĕн шкулсем социалисăмла çĕршыв валли пысăк пĕлÿлĕ, пур йенĕпе те писсе çитĕннĕ, социалисăм ĕçне чĕререн панăнна, хамăрăн халăха, тăван çĕршыва хĕрÿллĕн йуратакан патриотсем хатĕрлеччĕр.

Каламала, пĕлÿлĕх йенчен пирĕн шкулсем çаплах кайа йулса пыраççĕ-ха. Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕк итогĕсем пире ниепле те çырлахтараймаççĕ. Нумай шкулсенче вĕренекенсенчен виççĕмĕш пайĕ вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасть. Пĕр класра иккĕмĕш çула йулнисем чылай, çавăн пекех вĕренме пăрахнисен йышĕ те пысăк. Уйрăм шкулсенче вĕренекенсен дисциплини питĕ йапăхса кайнă, ачасем ашкăнни, хулиганлани çинчен калакан фактсем те пур.

Çаксем çинчен канашлусенче çивĕччĕн каласмала, воспитани ĕçне лайăх йĕркеленĕ учитĕлсен опычĕпе мĕн пур учитĕлсене паллаштармала.

Учитĕлсен йанварти канашлăвĕнче ачасен тарăн та çирĕп пĕлĕвĕсемшĕн, мĕн пур шкулсенче большевикла йĕркелĕх тăвассишĕн, ачасен дисциплинине çирĕплетессишĕн, воспитани ĕçне кăтартулăн йĕркелессишĕн кĕрешес ыйтусем тĕп вырăнта пулмала, вĕсене учитĕлсен тĕплĕн сÿтсе-йавса кирлĕ пек татмала. Канашлу кун йĕркинче пулакан докладсем чи малтан çак ыйтусене çутатса памала.

Август уйăхĕнче пулса иртнĕ канашлусен пленумĕсемпе секцийĕсенче лайăх ĕçлекен учитĕлсем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен докладсем туса панăччĕ. Ку докладсем канашлура итленĕ ытти докладсенчен чи пахисем пулнă. Йанварти канашлусенче лайăх, пуйан опытлă учитĕлсене тата анлăрах трибунă памалла. Ку ĕçĕн ăнăçлăхĕ, паллах, ăна йĕркелеме пĕлнинчен килет. Темăсемпе докладчиксене вăхăтра тата тĕрĕс уйăрса палăртнисĕр пуçне, учитĕлсене докладра тĕплĕн хатĕрленме пулăшмала.

Учитĕлсене йанварти канашлусенче вĕренÿпе воспитани ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе чăннипех те тĕрĕс, усăмлă кăтартусем парас ĕмĕтпе, канашлусем пуçлапас тĕле методикăлă выставкăсем уçсан, хулари чи лайăх учитĕлсем, августри кунсенчи пек, районсене пырсан питĕ аван пулнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен, хулари учитĕлсем йалти учитĕлсене питех те паха пулăшу пама пултараççĕ.

Çутĕç пайĕсене йертсе пыракансем, вĕсем шкулсен ĕçĕсем çинчен канашлусенче доклад тăваççĕ пулсан, ачасем вĕренÿре мĕнле ĕлкĕрсе пынине типĕ цифрăсемпе каласа пани, лайăх ĕçлекен учитĕлсемпе начар ĕçлекенсен хушамачĕсене каласа тухни канашлу участникĕсене ниепле те çырлахтарма пултараймаринне çирĕп асра тытмала. Учитĕлсем çутĕç пайĕсене йертсе пыракансенчен шкулсен ĕçне тарăнăн, тĕплĕн шухăшласа анализ пама, лайăх ĕçлекен педагогсен, шкул директăрĕсен, шкулти коллективсен ĕçне анлăн кăтартса пама, çутĕç оргăнĕсен тата уйрăм учитĕлсен ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе йапăшсене çивĕччĕн критиклеме ыйтаççĕ.

Йанварти канашлусем совет учитĕлĕсен политикăла активлăхĕпе пултарулăхĕ вăйлăн çĕкленнĕ тапхăрта пулса иртеççĕ.

Районри партипе совет тата общĕствăлă организацисем, çутĕç пайĕсем тата пуçламĕш шкулсемпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен професçилĕ союзĕн комитечĕсем уйрăм учитĕлсен вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи чаплă çитĕнĕвĕсене палăртса, правительствă умне вĕсене тата тивĕçлĕ учитĕлсен йатне нарас ыйту лартмала.

Нумай çул хушши ĕçлесе педагогикăла пуйан опыт пухнă учитĕлсем ытти мĕн пур учитĕлсен ĕçне хăйсен примерĕпе йертсе пымала.

И. САПОЖНИКАВ.

Халăх сучĕсенчи волокитăна пĕтермелле

Патăрйел районĕнчи халăх сучĕ 1937 çулти нойăбĕн 20-мĕшĕнче С. Плотникăвă ĕçне пăхса тухса М. Червовран алимент шырасе илме йышăннă. Кун хыççăн теиĕр уйăхран халăх сучĕ исполнительнай листа Канаш хулинчи халăх судне йарса парать. Исполнительнай лист çине пичет те, алă та пусман. Йĕркелесе çитермен хута Канаш хулинчи халăх сучĕ кайала тавăрса парать.

Çав хут 1938 çулти апрел уйăхĕнче Канаш хулинчи халăх судне, суд исполнителĕ патне çитет. Кунта М. Червовран алимент шырама вăл ĕçленĕ вырăна — вакунсем йусакан савăт управленине пĕлтерессĕ. Икĕ уйăхшăн алимент уйçи тытса йулаççĕ. Çакăн хыççăн Канаш хулинчи халăх сучĕ çак исполнителнай листа каллех Патăрйел районĕнчи халăх судне кайала тавăрса парать.

Çак тĕслĕхсем Патăрйел районĕнчи тата Канаш хулинчи халăх судйисем ĕççывнисен ыйтăвĕсем çине чунсăрла, бÿрократла пăхнине уççăн кăтартса параççĕ. Ĕç хучĕсене вырăнтан вырăна усасăр куçарса çÿреççĕ. Плотникăвă икĕ çул хушши ĕнтĕ алимент шыраса илеймест. Халăх сучĕсем йышăннă решенине пурнăça кĕртмеççĕ.

И. Степанăв.

Колхоз театрне аркатса йаракан Прытков

Чăвашсен III-мĕш колхоз театрĕ республикăн Йетĕрне таврашĕнчи районĕсенчи колхозсем тăрăх çÿресе пиншер ĕçхалăхне театр искусствине, социалисăмлă çĕршывăн çитĕнĕвĕсене кăтартать, культурăлă та пуйан пурăнма вĕрентет. Театр коллективĕ пысăк çитĕнÿпе ĕçлени театра массă мĕнле йышăннинчен те лайăх курăнать.

Анчах театрăн ÿсĕмĕсемпе пĕрлех курăнтерекен çитменлĕхсем те пулнă. Çав çитменлĕхсене пĕтерсе театра çирĕплетме комсомолăн Йетĕрне райкомĕн секретарĕ Чистаков, семйе тĕлĕшпе хăйне çывăх тăнă, хутла пĕлмен, искусствăна ăнланман Прыткова директăр пулма тупса парать.

Прытков театра çирĕплетес вырăнне йухăнтарса йачĕ, автомашинăна усăсăр çÿресе çĕмĕрсе пĕтерчĕ. Отпуск вăхăтĕнче Горькине кайса хăйне валли театр укçипе пин тенкĕ йахăн тăракан костюм илсе килнĕ. Кайран артиссене пĕчĕк ачасене суйнă пек: „Тăватă укçат илтĕм те, ахаль çынсенчен ильĕ пирки ăна та пуçтарса каçĕç, хам та аран тарса хăтăлтăм" тесе суйать. Кĕркунне çитнĕ, машина Прытков кил хушшинче çумăр айĕнче ларнă. Машинă дискăсем çине çеç тăрса йулнă, çĕтĕлсе пĕтнĕ урапасем ăçта килчĕ унта пылчăк çинче йăваланса выртнă.

Сценă çинче уса курмалли хаклă костюмсене ик-виçĕ уйăх ĕçленĕ хыççăн, тарласа хуралса вараланса пĕтнĕскерсене, арчасене тултарса лартнă та çаплипех çĕртсе выртарнă. Театрăн михлĕх пирне çуллахи вăхăтра хăй пурнакан ампар ăшне çапса тултарнă. Декорацисем пĕтĕмпе хăйĕн кил хушшинче йăваланса выртса йурăхсăра тухнă. Хут купăсне ачисене парса сĕтĕрттерсе çÿренĕ.

Прытков политикăла йăнăшсем тунине те манса хăвармала мар. Театр гастролĕре çÿренĕ вăхăтра, театр массăна мĕнле усă панине ăнлантарса пама тăрăшман, колхоз председателĕсене хăратса договăрсем туса çÿренĕ. Кайран: „а, есĕр троцкиссене мĕнле тăрă шыв çине кăларнине курасшăн мар?!" тесе калатăп çеç, пĕр самахсăрах председател договăр тăвать", тесе мухтавса кулнă артиссем умĕнче.

Хăйĕн билет сутса чăрманас килмен пирки „пире билет сутма йурамасть..." тесе колхозсенчен пĕр постановкăшăн 300—400 тенкĕ илнĕ. Хакла пирки хăшпĕр колхозсем йышăнманни те пулнă.

Кам ирĕк панă-ши Прыткова йалсене пырсан „Академи театрĕ" тесе çырса суйса афишăсем çапма?

Театр коллективĕ политикăпа моралль тĕлĕшĕнчен питĕ айалти вырăнта танă. Комсомол райкомĕ Прыткова политзанятисем иртерме хушнă, анчах вăл занятисем çине çаврăнса та пăхман.

Актăрсене виçшер уйăх ĕçукçи памасăр пурăнна, хватершĕн 9 уйăх паман. Театр тĕрлĕрен организацисем умĕнче парăма кĕрсе кайнă, çавăн пекех хăй илмелĕхсене те пухма шутламан. Профорганизаципе комсомол организацийĕ те çак çитменлĕхсем çинчен нимĕн те шарламан. Пухусенче Прытков хăй ыйтусем лартнă, хăй каласнă, хăй сеншусем панă, — ыттисем вăл çĕклекенсем çеç пулнă. Театрти çитменлĕхсем çинчен никам та чĕнме хăйман. Часах приказ парса ĕçрен кăларнă, выгавăрсемпе хăратнă.

Кăçалхи сезона пĕтĕмпе те çиччĕ çын çеç йулнă. Прытков театрта ĕç аванах марине курать те, директăртан тухса урăх ĕçе куçма шутлать. Ку ĕçе вăл пиче авторитетлă тăвать. Виç тăватă комсомолеца хăйĕнпе илет те, райкомол секретарĕ Чистаков патне прийома илсе каять. Анчах Чистаков умĕнче çуллан йăпалтатса „пысăк ĕç ем" тунă тесе суйнине курса хăшпĕрисем Прыткова критиклеме пăхнă. Театр укçипе ĕçкĕсем тунни çинчен (вăл ĕçкере Чистаков та пулнă) тата ытти çитменлĕхсем çинчен те каласан, вăл Иванов актора курайми пулнă, шартланса кăшкăрма пуçланă. Çапла вара Прытков театра пĕтĕмпех салатса йанине Чистаков пĕлсе тăнă пулин те, ун çинчен нимен те шарламан, нимĕнле мера та йышăнман. Пачах урăхла, хăйĕн „прийомĕнче" Прыткова ырланă, йулашкинчен ăна горпо ресторанне директăр пулма тупса панă. Театр çуменчи комсомол пуçламĕш организацине пайан кун та райком работникĕсем пырса курмаççĕ.

Фил. Иванов.

2.780 тенкĕлĕх çыраннă

Канашри йалхуçалăх кадрĕсем хатĕрлекен шкулта вĕренекенсем 1939 çул валли 2.780 тенкĕлĕх тĕрлĕ хаçат-журналсем çыранчĕç.

Ф. Григорйев.

ССР Сойузĕнче ĕç хисеплĕх,— чаплăлах тата геройлăх ĕçĕ

Пирĕн çĕршывра етем историйĕнчи пит пысăк улшăну пулчĕ—ĕçлев ирексĕр ĕçрен хамăршăн тăвакан ĕç пулса тăчĕ. Социалисăмла революци иреке кăларнă мĕлйуншар труженниксем пысăкран та пысăк хастарлăхпа çĕнĕ, социалисăмлă общĕства тума тытăнчĕç. Ленинăн—Сталинăн, геройла партийĕ йертсе пыракан пирĕн халăх, ĕлĕкхи вăхăтра кайра тăнă, вăрçăсемпе интервенцисем йухăнтарса хăварнă пысăк çĕршыва социалисăмла çĕнетес тĕлĕшпе халиччен курман гĕлĕнмеле ĕçсем турĕ. Хамăршăн, хамăр халăхшăн, хамăрăн тăван çĕршывшăн ĕçлесси—ака мĕн пулса тăчĕ массăсен ĕçлев геройсамĕн хаватла çалкуçĕ. Мĕлйуншар çынсем социалисăмла ăмăртăва тухрĕç, хăйсен таланчĕсене уçса кăтартрĕç, большевиксен партийĕ йертсе пынипе социалисăмлă економикăна—çĕнĕ общĕствăн никĕсне турĕç.

Массăсен психологинче, вĕсем ĕç çине пăхассинче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Социалисăмла ăмăрту хăйне хĕрхенмесĕр пĕтĕм пултарулăха паракан, геройла ĕçе çуратса каларчĕ. Сталин йулташ калать: «Ăмăртун чи паха йенĕ вăл—ăмăрту çынсем ĕç çине пăхассине тĕпренех улăштарни пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл ĕлĕк намăслăх, йавăр пусмăр шутланнă ĕçе хаклă хисеплĕхĕн ĕçĕ, мухтавлăхăн ĕçĕ, чаплăлăхпа геройлăхăн ĕçĕ туса хурать. Çавăн пекки капиталисăмлă çĕршывсенче нимĕн те çук, пулма та пултараймасть. Унта, капиталиссем патĕнче, чи йуратнă, общĕства ырлама тивĕçлĕ ĕç вăл — рентă тытасси, процентсем çинче пурăнасси, йĕрĕнчĕк ĕç вырăнче шутланакан ĕçрен ирĕклĕ пуласси. Пирĕн патăрта, ССР Сойузĕнче, йăлтах урăхла, чи йуратнă, общĕствă ырлама тивĕçлĕ ĕç вăл — ĕç геройĕ пулма май пурри, ударлă ĕçĕн геройĕ пулма май пурри пулать, ăна мĕлйуншар ĕççыннисем хушшинче хисеп ореолĕпе витсе тăраççĕ».

Пирĕн çĕршыври стахановецсемпе стахановкăсене, ударниксемпе ударницăсене, социалисăм строительствин пĕтĕм фрончĕсенчи малта пыракан борецсене хисеплĕх ореолĕ çутатса тăрать. Партин Сталинла Тĕп Комитечĕпе Совет Правительстви техника, наука, культура новаторĕсен чи хăйулă пуçарăвĕсене хавхалантарса пыраççĕ тата вĕсен йачĕсене пĕтĕм совет халăхĕ пĕлсе тăмала тăваççĕ. Украинă колхозници Марийа Демченкона унăн тусĕсем халиччен никçан пулман вăйлă тухăçла сахăр кашманĕ туса илсен. Партин Тĕп Комитечĕ. Правительствă, Сталин йулташ тата вĕсемпе пĕрле пĕтĕм халăх пйатисотницăсен йухăмне пуçарса йаракансене мухтав турĕç. Рабочисем: Стаханăв, Бусыгин, Сметанин, Виноградăвсем стахановла йухăм йалавне çĕклесе йарсан, Партин Тĕп Комитечĕ, Правительствă, Сталин йулташ çак йухăма пуçарса йаракансене Кремле чĕнсе илчĕç, вĕсене пĕтĕм халăх умĕнче мухтава каларчĕç, йуратупа çавăрса илчĕç. Партипе совет власĕ геройла ĕç çыннисем çине питĕ те пысăк тимлĕхпе пăхнине ССРС Верховнай Совет Президиумĕн Социалисăмлă Ĕçĕн Геройĕ йатне памала тăвасси тата «За трудовую доблесть» медальпе «За трудовое отличие» медаль тăвасси çинчен пайан пичетленсе тухакан Указĕсем те лайăх кăтартса параççĕ.

ССРС Верховнай Совет Президиумĕн пичетленсе тухакан Указĕсем çакна кăтартса параççĕ: пирĕн çĕршывра, çапăçури хăвулăхпа тата çар ĕçĕнчи чаплăлăхпа пĕрлех, ĕç фронтĕнчи отличи, ĕçри чаплăлăха, социалисăмлă ĕç геройсамне те хаклаççĕ. 1920 ç. апрел уйăхĕнче Ленин калăнă сăмахсем аса килеççĕ. Ун чухне граждăн вăрçин йулашки вут-кăварĕсем тин сÿнме пуçланă тата пирĕн çĕршыв йухăну хĕскĕчĕнче тăнă: «Рабочи клас умĕнче чи пысăк испытани тăрать, кашни работникăн, кашни работницăн красноармеецă фронтра тĕлĕнмеле ĕçсем тунинчен те ытларах тĕлĕнмеле ĕçсем тумалла». Совет халăхĕ çак аслă испытанине тивĕçлипе тытрĕ. Хуçалăх ĕçĕнчи çитĕнÿсене, культурă ĕçĕнчи çитĕнÿсене, наукăна техникăра тупнă çитĕнÿсене çĕршыв вăрçă фронтĕнче тупнă çитĕнÿсем пекех пысăк вырăна хурса чысласть, мĕншĕн тесен, социалисăмла ĕç тăвакан кашни çĕнтерÿ хамăр тăван çĕршывăн оборонă култарулăхĕпе çар хăватне тĕреклетет. Пайан савăтсенче, шахтăсенче, чукунçулсем çинче, колхозсенче пирĕн халăх партин йертсе пынипе çитес çапăçусенче тулашри тăшмана хирĕç кĕрешсе тумали çĕнтерÿсем тупатанаççĕ. Мĕн чухлĕ çĕркăмрăк, хурăç, тыра, нефть, машинăсем ытларах, çавăн чухлĕ пирĕн çĕршыв вăйлăрах, çавăн чухлĕ унăн вăйĕ никам çĕнтерейми пулать.

Кашни кун пире хуçалăхпа культурă строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем кÿрет. Стахановĕцсен, ударниксен социалисăмла стройкăра малти вырăнта тăракансен речĕсем нумайланаççĕ. Хаçатсем кашни кун çулталăк планне срукчен тултарнă предприйатисем çинчен пĕлтерÿсем пичетлесе тăраççĕ. Пайан совет халăхĕ пирĕн çĕршыври апат-çимĕç промышленноçĕ хăйĕн çулталăк планне срукчен тултарни çинчен калакан пĕлтерĕве савăнăçлăн йышăнать. Пирĕн çĕршыв хуçалăхĕпе культурин чаплă, ĕçре мала тухнă лайăх çынсемсĕр пĕр отрăçĕл те çук. Пирĕн ĕçре паллă пулса танишĕн, ĕçри чаплăлăха, ĕçри геройствăна кăтартнишăн наградă памали çынсем нумай.


Çĕршыв ударлă ĕçе пахалать. «За трудовое отличие» медаль уйрăмах палăрса тăракан ударла ĕçшĕн, ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕшĕн, наукăна, техникăна аталантарас ĕçре тунă заслугăсемшĕн рабочисене, колхозниксене, служăщисене, инженерла-техникла работниксемпе хуçалăх работникĕсене, транспăрт, строительствă, суту-илÿпе кооперации организацисен, культурăпа научнай учреждени работникесене паракан наградă пулать. Социалисăм строительствин малта тăракан паттăрĕсене, техникăпа усă курас çĕрте стахановла тĕслĕхсем кăтартакансене, ĕç тухăçлăхĕнче пысăк нормăсем тăвакансене, наукă, техникă, культура аталанăвне малала йарса пыракансене, пĕтĕм вăйхăвата хурса ĕçленĕшĕн, «За трудовую доблесть» медале парса наградăлаççĕ.

Хуçалăхпа культура строительствинчи отличин чи аслă степенĕ вăл — Социалисăмлă Ĕçĕн Геройĕ йат пулса тăрать. Вăл йата «хăйсен промышлĕннăçри, йалхуçалăхĕнчи, транспăртри, суту-илÿ ĕçĕнчи новатăрлă ĕçĕсемпе, научнай открытисемпе, техникăлă изобретенисемпе халăх хуçалăхне, культурăпа наукăна хăпартма, ССРС вăй-хăватне тата унăн мухтавлăхне ÿстерме пулăшса государствă умĕнче пит чаплă ĕçсем тунă» çынсене параççĕ.

Социалисăмла строй новатăрствă валли анлăран та анлă çулсем уçса пачĕ, пирĕн общĕствă пĕр вырăнта пăнтăхса ларассине чăтса тăмасть. Большевиксен природинче—пĕр татти-сыпписĕр малала та малала илсе пыракан вăй. Пирĕн çĕршывра новатăршăн чăрсăрланса ĕçлемелли, хăйĕн пуçарулăхне, хăйĕн творчествине анлăн сарса йамали вырăнсем ĕçсем çителĕклĕ. Наукăри новатăрсем, техникари новатăрсем, производствăна организацилес ĕçри новатăрсем,—вĕсем ĕнер пурăнакан кунсенчи геройсем, хамăр çĕршывăн утăмĕсене хăвартлатакан, унăн çĕнтерĕвĕсене темиçе хут ÿстерсе пыракан геройсем.

«За трудовое отличие» тата «За трудовую доблесть» медальсене туни тата Социалисăмла Ĕçĕн Геройĕ йата туни вăл —стахановла йухăма малала татах вăйлатса йамали стимул пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршыв умне кашни кунах çĕнĕрен çĕнĕ задачăсем тухса тăраççĕ. Ĕнер 1939 çул умĕнче — хамăрăн индустри, хамăрăн çĕрĕçĕ, хамăрăн культурă малала татах ÿссе чечекленмели çул умĕнче тăратпăр. Промышлĕннăçпа транспăртри работниксен умĕнче техникăн çĕнĕ çÿлĕшĕсене алла илес, ĕç тухăçлăхне малала татах ÿстерес, уйрăм стахановла рекордсенчен стахановла предприйатисем çине, коллективлă стахановла ĕç çине куçас задачă тăрать. Пирĕн колхозниксем сталинла тырпул тухăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕç. Наукă, техникă, искусствă работникĕсен совет культурин йалавне тата çÿлерех çĕклес пулать. Государствă учреждениссенчи, суту-илÿпе кооперации аппаратĕнчи служащисем халăха мĕн кирлине парса тăрас ĕçе малалах лайăхлатса пырас тĕлĕшпе ĕçлĕç. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пĕтĕм совет халăхĕ коммунисăм туллийĕнех çĕнтересси патне илсе пыракан çулпа халиччен пекех малала утĕç. Кам боецсен малти речĕсенче пырĕ, унăн тавра хисеппе мухтав çуталса тăрĕ.

(«Правда» умстатйин, 1938 çул, декабĕрăн 28-мĕш).



Нумай çул ÿсекен тулă — совет учонăйĕсен аллипе тунăскер. Ăна акса тăвас тĕлĕшпе ăлхуçалăх наукисен докторĕ, СССР Верховнăй Совет депутачĕ орденоносец Н. В. Цицин ĕçлет.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. В. Цицин йулташ Немчиновскăри (Мускав патĕнче) селекци участкинче тырпула пĕрремĕш хут пуçтарса илнĕ хыççăн нумай çул ÿсекен тулă çĕнĕрен ÿсĕннине пăхат. В. Иванов фотоÿкерчĕкĕ. (Прессклише).

Çĕре çемçетмелисемпе анлăн усă курмала

Çĕре çемçетмелисем тырпул тухăçлăхне ÿстерни пирĕншĕн, колхозниксемшĕн, паллă. Епĕр ăна хамăр çĕре сăнаса пыратпăр. Кăçал пирĕн «Трактăр» колхозри (Вăрнар р.) бригадăсем иртнĕ çулта 142 тоннă торф тăкса çемçетнĕ участкăсенче пурăмах вăйла тырпул туса илчĕç. Çав хушăрах пирĕн хăшпĕр бригадăсем, сăмахран, пилĕккĕмĕш бригадă (бригадирĕ И. Годунов) иртнĕ çулта кÿрсе килнĕ çилвинитна тата кали тăварĕне усă курман. Çавăнпа йĕтĕ ку бригадăн тырпул тухăçлăхĕ ытти бригадăсенчен начартарах пулнă.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине бригадăсем, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче нихăçанхинчен те вăйлăрах сарса пымала. Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене ытлашши хатĕрлеме тăрăшмала. Пирĕн колхоза 1,6 гектар лаптăк çинче торф пур. Çав торфа сăнаса пăхна тăрăх, унти 75 процент азот тата кали тăварĕ, кальци, фосфорит çителĕклĕ таран пуррине катартнă.

Торф 78 сантиметр хулăнăш, унта кашни шутпа 4.200 тоннă торф шутланат. Çакăн чухлĕ торф пире темиçе çул хушши усă курма çитет.

Кашни колхозăн çакнашкал çĕре çемçетмелисемпе анлăн усă курма тăрăшас пулат.

Г. Семенăв.

Шкулсен ĕçне нумай лайăхлатмала

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа декабĕрĕн 7-мĕшне çитиччен Вăрнар районĕнче учитĕлсен аттестаци комиççи ĕçлерĕ. Комиççи иртнĕ çулта аттестаци витĕр тухман 74 учителĕн ĕçĕсене пăхса тухрĕ. Вĕсенчен 28 çынна пуçламĕш шкул учитĕл йатне, 10 çынна вăтам шкул учитĕл йатне панă. 32 учителе шкул ĕçĕнче хăварса, çак çитес çулсенче вăтам тата аслă шкулсем паракан пĕлĕве илме хушнă.

Пирĕн аслă Совет Сойузĕнче учитĕлсен пурнăçĕ кувран-кун аванланса пырат. Учитĕлсем хăйсен пултарулăхне усăмлăн кăтартаççĕ.

Чĕререн тăрăшса, аван ĕçлекен учителсем Вăрнар районĕнче сахал мар. Анчах çак совет интеллигенци хушшинче учитĕл ĕçне йурăхсăррисем те пăларчĕç. Мăн Йăвăш шкулĕнчи Михайлăв учитĕл хăйĕн политикăлă пĕлÿне хăпартас тĕлĕшпе начар ĕçлет, ачасене йапăх вĕрентет, методикăна вĕренес ĕçе хакламаст. Михайлăв ĕçре политикăлă пысăк йанăшсем тăват. Паллах, кун пек учитĕл шкулта ĕçлеме йурăхлă мар. Çавăнпа аттестаци комиççи Михайлăва ĕçрен кăлармала турĕ.

Рункă шкулĕнче ĕçлекен И. П. Дмитрийĕв учитĕл политикăна питĕ начар чухлат. Вăл Белоруççин тĕп хулине пĕлмест. М. И. Калинин йулташ мĕн ĕçре ĕçленине каласа пама пултараймаст. Пĕлÿ йенчен вăл питĕ начар. Хирпуçĕнче ĕçлекен А. М. Митрофанăв учитĕл те çавах. хăйĕн пĕлÿне хăпартас тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемест. Хăмăш шкулĕнче Й. К. Капитовăв хăй мĕнле методикăпа ĕçленине пĕлмест. Çак „учитĕлсем" шкул ĕçĕнче пултараймаснине курăнчĕ, çавăнпа вĕсене аттестаци комиççи ĕçрен кăлармала турĕ.

Аттестаци тата çакна кăтартса пачĕ: учитĕлсем хушшинче нумайĕшĕ Ленин, Сталин тата ытти çулпуçсем халăха вĕрентес тĕлĕшпе каланă, çырнă произведенисене, партипе правительствă решенисене вуламаççĕ. Çавăнпа шкулта коммунисла воспитани парас ĕçе йĕркелеме пĕлмеççĕ. „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренме нумайĕшĕ ку тараничченех те тытăнайман.

Партипе правительствă шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе питĕ пысăк вырăна хураççĕ. Анчах хăшпĕр учитĕлсем ку ответлă задачăна хак памаççĕ. Сăмахран, Хирпуç шкулĕн заведуйушчийĕ Алексейĕвă йулташ Левицкайа учитĕлницăна характеристикă çырса панă. Çав характеристикăра Алексейĕвă 27 йанăш тунă. Çак йапала вăл Алексейĕвă вырăс грамматикине пачах пĕлменнине кăтарат.

Вăрнар вăтам шкулĕнче Г. А. Амвросиĕвă вĕренекенсен тетрачĕсенчи йанăшсене тÿрлетмесĕрех хăварат. Пĕлÿ паллисене кĕскен „хор.", „поср." тесе анчах лартса пырат. Амвросиĕв завуч ĕçне те начар туса пырат.

Аттестаци комиççинĕ вĕрентÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсене палартса, нумай учитĕлсене малалла ĕçе аванлатма хушса хăварчĕ.

ПСК(б)П Вăрнар райкомĕ учитĕлсене аттестаци тунă ĕçĕн итогĕсене бÿрора пăхса тухса, районра шкул ĕçне малалла мĕнле йĕркелемеллине кăтартса пачĕ. Шкул ĕçне лайăхлатма кирлĕ условисем пурте пур, учитĕлсен чĕререн тăрăшса тимлĕн ĕçлени çеç кирлĕ. Вăрнар райçутĕç пайĕн учитĕлсене ĕçре куллен лайăх пулăшса пымала, шкул директăрĕсемпе заведуйушчисенчен ĕçре ытларах ответлăх ыйтмала. Учитĕлсем хушшинче комсомолĕçсем сахал мар, анчах вĕсем пур чухне те ĕçре малтах пыраймаççĕ. Райкомолăн комсомолĕц-учитĕлсемпе ытларах ĕçлемелле.

Ф. П. Романăв.

Ĕçлев кĕнекине памала тунине пĕтĕм халăх ырлат

Социалисăмлă предприйатисенче çирĕп дисциплинă пултăр

Шупашкарти макарон хапрăкĕн коллективĕ пысăк мар. Унта рабочисемпе служащисем пĕтĕмпе те 80 çын ытларах кăна ĕçлеççĕ. Апла пулсан, кунта ĕçсен дисциплинине çирĕппĕн тытса пымала тумашкăн пысăк предприйатисенчен чылай çăмăл. Анчах та хапрăк руководителĕсем, çавăн пекех профсойуз организацийĕ те, ĕç дисциплинине çирĕплетес ыйту çине çăмăллăн пăхнă. Прогулщиксене, летунсене, рвачсене хирĕç кĕрешсе пыман. Хăшпĕр йенĕпе вĕсене ачашланă та.

Руководитĕлсен кăмăлне кура ĕçлеме хăнăхнă ÿркенекен хăшпĕр рабочисем ĕç дисциплинине пăсса пынă. Кăçал иртнĕ 11 уйăх хушшинче хапрăкра 112 ĕçкунĕ прогул пулнă. Çак прогулсем пулман пулсан хапрăк государствăна 10 тоннă ытларах продукци пама пултаратчĕ.

Хапрăкра ĕç вăйĕ пĕрмайăх улшăнса тăрат. Иртнĕ 11 уйăх хушшинче хапрăка 111 çын ĕçлеме кĕнĕ, çав вăхăтрах 108 çын ĕçрен тухса кайнă, урăхла каласан, хапрăкра ĕçлекенсен составĕ икĕ хут улшăннă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх рабочисемпе служащисене Ĕçлев кĕнеки памалла туни прогулщиксене хирĕç кĕрешме тата ĕç вăйĕ улшăнса тăрассине пĕтерме май парат. Вăл тÿррĕн ĕçлекенсĕне хавхалантарат. Летунсемпе прогулщиксене хăйсен пурнăç йĕркине улăштарма хушат. Пирĕн хапрăкри рабочисем ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Ĕçлев кĕнеки памала тăвасси çинчен" йышăннă постановленине сÿтсе-йавнă хыççăн ăна пысăк кăмăлпа ырларĕç.

Производствăра нумай çулсем хушши ĕçлекенсем: Красильникăва, Василйĕв тата ытти йулташсем те Ĕçлев кĕнеки пирĕншĕн чаплă та хаклă документ, тесе ырлаççĕ.

Вальдкин.
Макарон хапрăкĕнчи економист.

Ĕçлев кĕнеки— лайăх ĕçлеме хавхалантарат

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Ĕçлев кĕнеки памала тăвасси çинчен" кăларнă постановленине Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Ĕçлев кĕнеки чи-чăнах ĕç дисциплинине кирлĕ пек çирĕплетме, çавна май ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшат.

Малашне Ĕçлев кĕнеки çине кам мĕнле ĕçленине çырса пыраççĕ. Ĕçлев кĕнеки çинче рабочин йе служащин хастарлăхĕ, тÿрĕлĕхĕ курăнат. Çавăнпа епĕ ăна чĕререн хапăл туса йышăнатăп.

И. Афанаçйĕв.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи урапа цехĕнчи техприйомщик.

Лайăх ĕçлессишĕн кĕрешме чĕнет

Пирĕн строительствă ĕç вăйĕ пысăккăн улшăнса тăнипе нумай чăрмавсем тÿсет. Çак çитменлĕхе пĕтерес çĕрте Ĕçлев кĕнеки памала туни пысăк вырăн йышăнат.

Ĕçлев кĕнеки çине кам мĕнле ĕçленине тата ĕçрен тухас пулсан мĕншĕн тухнине йе кăларнине çыраççĕ. Çапла туни прогулщиксемпе летунсене намăслантарат. Мухтавлă ĕç тăвакансене малашне тата та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарат.

А. Йефимăв.
Шупашкарти çĕнĕ строитĕлствăра çитĕннисене вĕрентекен учитĕл.

Халăх переписçне хатĕрленессине татса паракан кунсем

Агитаци ĕçĕ лайăхланчĕ

ВĂРМАР. Çĕнĕ Вĕренер йалсоветĕнче агитаци ĕçне лайăх организациленĕ. Йалсовечĕпе 12 агитатăр, вĕсене счетчиксен районри курсĕнчен вĕрĕнсе килнĕ учительница В. Николайĕвă йулташ йертсе пырат, консультацисем иртерет.

Агитатăрсем Верховнăй Советсен суйлав кампанийĕнче ĕçленĕ опытпа усă кураççĕ. Вĕсем пулас перепис çинчен килĕрен çÿресе ăнлантарса параççĕ.

С. Архипăв.

Учитĕл-агитатăрсем

ТРАК. Чатукассинчи пуçламĕш шкулăн учителсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ йалсенче Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ çинчен ăнлантарас ĕçе лайăх организациленĕ.

Ф. Йакăвлĕвă учитĕлница Шăхар йалне пырса пулас перепис çинчен виçĕ хут калаçу иртерчĕ.

А. Филиппăв.

Докладсемпе калаçусем

ИШЛЕЙ. Ырашпулăх колхозĕ çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ политикăлла агитаци ĕçне лайăх туса пырат. Комсомолец агитатăрсем партипе правительствă йышăнна решенисем çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Халĕ халăх переписçне хатĕрленнине май колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Унта перепиçе мĕншĕн иртерни тата унăн задачисем çинчен докладсем пулчĕç. Комсомолĕцсем уйрăм çынсемпе те перепис çинчен час-часах калаçусем иртереççĕ.

Комсомол организацийĕ культурăлла-массăллă ĕçсен планне тунă. План тăрăх тĕнчери лару-тăру тата хамăр çĕршыври паллă событисем çинчен уйăхра икĕ хут лекцисем пулса иртеççĕ.

Н. Русанăв.

Йалти интеллигенци перепиçе хатĕрленес ĕçре

КАНАШ. Сиккассинче интеллигенци хисепĕ ÿссех пырат. Халĕ йалта 15 учитĕл, пĕр трахработник, виçĕ акушерка. Интеллигенци перепиçе хĕрÿллĕн хатĕрленме тытăнчĕ. Учитĕл И. Васильĕв йулташ инструктăр-контролĕр пулса ĕçлемелле. Вăл халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне лайăх туса пырат.

Учитĕл-агитатăрсем Портнов тата Зайцĕв йулташсем те ĕçе хастарлăн хутшăнна. Пулас перепис çинчен докладсемпе калаçусем иртереççĕ.

Бельский.

Халăх перепиçĕ тата тĕне хирĕç кĕрешес задачăсем

Пĕтĕм Сойузри халăх переписне иртерни пĕтĕм халăх хуçалăхĕшĕн калама çук пысăк ĕç пулса тăрат. Çакна епĕр çеç мар, тăшмансем те пĕлеççĕ. Паллах, тăшмансем перепис иртерме хатĕрленнĕ тата иртернĕ чухне тĕрлĕ чăрмавсем кÿме тăрăшĕç. Чиркÿ çыннисемпе сектантсем çак ĕçре сийĕн кÿме пăхĕç. Вĕсем 1937 çулта перепис иртернĕ чухне те пысăк сийĕн кÿнĕ. Ĕненекенсем хушшинче тĕрлĕ суйă сăмахсем сарса, вĕсене перепиçе хутшăнтармасăр хăварма тăрăшнă.

Попсем, чиркÿ çыннисем, сектантсем перепиçе хирĕçле ĕçĕсене кăтартакан фактсем пирĕн Чăваш республикинче те пур. 1937 çулта перепис иртернĕ чухне Васнкассинчи (Çĕрпÿ р.) Савельĕв поп перепис ĕçĕнче кансĕрлес ĕмĕтпе, тÿрех ĕненекенсене:—сирĕн çине пысăк налог хураççĕ, тесе ĕнентерме тата сире антихриста сутаççĕ, тесе хăратма хăтланнă. Шăнашри поп ĕненекенсене антихрист „пичечĕпе хăратса перепиçрен сыхланма чĕннĕ. Поп кĕске вăхăтрах ĕненекенсем хушшинче пысăк хак па 500 хĕрес сутса йулнă. Çавăн пекех Тенгей (Тутаркас р.) чиркÿ старасти Лукин Павел хăй пилекшер пус парса илнĕ хĕрессене вăлтăр пуса сутса кĕсйине хуламлатнă. Хăшпĕр çĕрте чиркÿ çыннисем перепис вăхăтĕнче коллективлă ĕç йĕркине пăсма хăтланнисем те пулнă. Дурасавкă йалĕнче (Пăрачкав р.) тăшманла елементсем промысла ертелĕн ĕçне аркатас шухăшпа ертел членĕсене: сире перепис хыççăн ертелтен кăларса çĕрсĕр хăвараççĕ, тесе хăратма тăрăшнă. Çавăн пекех Семеновск йалсоветĕнчи (Пăрачкав р.) колхозниксене те улталама хăтланнă. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур. Перепиçе хирĕç пырас çĕрте попсемпе чиркÿ çыннисем, сектантсем тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Çĕнйал Чурачăкри (Ишлей р.) Алмазăва, Кушкăри (Йĕлчĕк р.) Перепелкина Анна тата Никита Федăрăв, Çĕнсала йалĕнчи (Куславкка р.) Акулина Малова тата Наталийа Николайĕва сектантсем те перепис çинчен суйă сăмахсем сарса çÿренĕ. Кун пек ĕç Алмандайĕвăра (Сĕнтĕрвăрри р.) тата ытти çĕрте те пулкаланă.

Чиркÿ çыннисем тата сектантсем пулас перепис вăхăтĕнче те хăйсен сийенлĕ ĕçĕсене тума пăхĕç. Çавăнпа та ĕненекенсене перепис задачисемпе унăн тĕллевĕсем çинчен тата тĕнпе чиркÿ сийĕне çинчен анлăн ăнлантарса памала. Халăх тăшманĕсен (çавăн пекех попсен, чиркÿ çыннисен, сектантсен) перепиçе иртерме чăрмантаракан сийенле ĕçĕсене вăхăтра сиссе, тăрă шыв çине кăларса çапса çĕмĕрмелле. Тĕнрен уйралса çитейменнисене халăх перепиçĕ политика, економика тата культура ĕçĕсене сарас тĕлĕшпе пысăк вырăнта тăни çинчен ăнлантармала.

Ăнлантарула ĕçе «раштава» хирĕçле кампани задачисемпе, тĕне хирĕçле ĕçĕн организацилĕ ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пымала. Калаçусене çак темăсем тăрăх туса иртермелле: халăх перепиçĕ тата тĕне хирĕçле пропагандăн задачисем, тĕн тата чиркÿ—фашисам службинче, «раштав» ăçтан пуçланса кайнă тата вăл камшăн усăллă пулнă, тĕн праçникĕсем халăх перепиçне мĕнле сийен тăваççĕ т. ыт. те. Тĕне хирĕçле пропагандăна сарса пынă май, Вăрçăллă Турасарсен Сойузĕн организаци ĕçĕсене вăйлатмала, йачейкăсемпе кружоксем çук çĕрте вĕсене çĕнĕрен уçмала.

Ф. Тимофейĕв.

Суту-илÿ ĕçне йĕркелемен районра

Çĕрпÿре, ытти район центрĕсенче пекех, райпотребсойуз та, райĕçтавкомăн суту-илÿ пайĕ те пур. Çак асăннă оргăнсем районра суту-илÿ ĕçне организациелесе, йĕркелесе пыракансем пулмала. Анчах Çĕрпÿ районĕнче райпотребсойузла райĕçтавкомăн суту-илÿ пайĕн ĕçĕсем курăнмаççĕ. Районра çак асăннă оргăнсем пуррине Çĕрпÿ хулинчи ĕçхалăхĕ те, районри *колхозниксемпе совет интеллигенцийĕ те вĕсем тÿсме çук йапăх ĕçлесе пыни йенчен çеç пĕлеççĕ.*

Çĕрпÿре суту-илÿ ĕçĕ мĕнле тăнине фактсемпе илсе кăтартăпăр. Кирек хăш магазина йе ларйока кĕрсен табак йе спичкă тавраш тупас çук. Сахăр илес тетĕн пулсан, Çĕрпÿри магазинсене пырса ыйтма та кирлĕ мар. Пĕр сăмахпа каласан, халăха куллен кирлĕ йапаласене илес тесессĕн, Çĕрпÿ районĕнчи çынсем, кирек мĕнле ĕçпеле кайсассăн йе Канашран, йе Шупашкартан илсе таврăнаççĕ.

Çĕрпÿ—авалхи хула, пысăк хула мар, анчах кунта пуранакан халăхсен шучĕ çуларан çул хутшăнса, йышланса пырат. Çĕрпÿ хулинче тĕрлĕ шкулсем нумай. Унта преподавательсемпе вĕренекенсен йышĕ сахал мар. Студентсем вальди мĕн пурĕ те икĕ столовăй кăна. Анчах ку столовăйсенче апатланса тухас тесе кĕрсе ларсассăн сахалтан та пĕр сехет çурă кĕтме тивет. Столовăйне пыракансене вăхăтра апат паманнине пула унта тÿсме çук йĕркесĕрлĕх, кăшкăру, тавлашу т. ыт. пулаççĕ. Столовăйсенче ĕçлекенсем хушшинче çынсене улталама хатланакансем те пур. Анчах вăл „чире" никам та—райпотребсойуз та, райĕçтавкомăн суту-илÿ пайĕ те (заведуйушчийĕ Тавлэ), çавăн пекех Иванăвăри йалпо правленийĕ те (председательĕ Долгункин) пĕтерме шутламаççĕ. Нумайăх та пулмаст, столовăйра пĕр çынна çăкăр 200 грам вырăнне 130 грам виçсе панă. Ку факт çинчен райпотребсойуз председательне Иванов йулташа пĕлтерне, анчах нимĕн тунийĕх те курăнмаст.

Магазинсенче çăкăр сутнă çĕрте йалалăх черет тăраççĕ. Мĕншĕн? Çăкăр çителĕклĕ илеймеççĕ-ши? Çук, çăкăрĕшĕн мар. Заготзерновра нарйад тăрăх илекен çăкăра 50—60 процент çеç усă кураççĕ. Ку суту-илÿ ĕçĕнчи работниксем ĕçлеме пĕлменнинчен килет. Пекарньă тунă çĕре 20 пин тенкĕ укçа расхутланă. Анчах пекарньă халĕ те ĕçлемест. Халĕ икĕ пекарньă ĕçлеççĕ, анчах вĕсем çителĕклĕ мар. Çăкăр пĕçерсе сутас ĕçе райпотребсойуз кăна мар, районри вăрман-вутă хатĕрлеттерекен кантур та йалăх ĕçлет. Çак асăннă кантур вăхăтра кирлĕ таран вутă тăратайманнипе пекарньăсем ĕçлемесĕр лараççĕ.

Суту-илÿ организацисенче производствăри дисциплинăна хăпартас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Ун çинчен райпотребсойузра тухакан стена хаçачĕ те, çавăн пекех тата районри хаçат та нимĕн те шарламаççĕ. Прикащиксем магазинсене ним сăлтавсăр, вăхăт çитмесĕр питĕрсе тухса каяççĕ. Вĕсемшĕн тавар илес текен çынсем нимĕн те мар.

Суту-илÿ ĕçне йертсе пыракан вырăнсене выдвиженĕцсене лартнă. Ку лайăх ĕç. Анчах выдвиженĕцсене куллен пулăшмала, вĕрентмелле, вара ĕç малалла кайма пултарат.

П. Оçипăв.

Столовăйра йĕркелĕх çук

Канаш хули çулсеренех ÿсе пырат. Çапла пулсан та кунта столовăйсем начар ĕçлеççĕ. Столовăйсем çитмеççĕ, халĕ ĕçлекен столовăйсенче те йĕркелĕх сахал.

Студентсен пĕррремĕш номерле столовăйĕнче тасалăх çук, кĕтессенче ерешмен карти, тусан. Официанткăсем апат час пырса памаççĕ. апат çийес пулсан икĕ сехете йахăн кĕтсе лармала пулат. Столовăйĕнче паракан çăкăра тачка пĕçереççĕ тата ăна та тарелкăсемпе памаççĕ, алăпа илсе каймала пулат.

Апат пахалăхĕ начар, час-часах пĕр пек апат пулат. Столовăйне пыракансем, столовăй заведуйушчийĕ Мошинăн çак çитменлĕхсене пĕтермели çинчен сахал мар асăрхаттарна. Анчах çапах вăл столовăйне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле ÿлшăну та тумаст.

И. Федăрăв.

Фото-журнал

УЛАТĂР. Педагогикă училищинче кăçалхи вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнчех фото кружок организациленĕ. Кружокра 20 çын тăрат. Ку тараничченех кружокăн 10 занйати пулса иртнĕ. Халĕ кружок валли 525 тенкĕ парса «лейка» фотоаппарат туйанна. Кружок членĕсенчен 10 çын хăйсем тĕллĕн сăн ÿкерме вĕренчĕç. Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ май фото кружок членĕсем ÿкернĕ фотокартачкăсемпе уйрăм фото-журнал кăларчĕç. Вăл журнал çинче шкулти вĕренÿ отличникĕсемпе ударникĕсен сăнĕсене кĕртнĕ.

В. Пуганăв.

Государствăна тырă сутрĕç

Иртеменкассинчи (Вăрнар р.) «Победа» колхоз членĕсем государствăна 300 пăт тырă сутрĕç. Колхоз тырă сутнă укçапа тĕрлĕрен йалхуçалăх машинĕсем туйанат.

В. Йарков.

Билетсене халĕ те улăштарса пĕтермен

ТАВАЙ. Осоавиахим билечĕсене улăштарнă вăхăтра райсовет чылай Осоавиахим организацийĕсен оборона ĕçне вĕренессине лайăхлатрĕç. Çапла пула Осоавиахим членне вĕренекенсен йышĕ те ÿсрĕ.

Осоавиахимăн Елпуçĕнчи пуçламăш организацийĕ билетсен улăштарнă вăхăтра çĕнĕрен 75 çын члена кĕнĕ. Халĕ вĕсем пурте оборона ĕçне йуратса вĕренеççĕ. Çак кунсенче çеç организацире 17 çын ПВХО, 6 çын «Ворошиловский стрелок» значокĕсем илчĕç.

Билетсене улăштарнă вăхăтра Тенер [illegible] Осоавиахим организацийĕнче 15 çын ПВХО, 6 çын «Ворошиловский стрелок» значокĕсене илнĕ. Халĕ Лачкасси, Тарваш, Чурел, Тенейал Осоавиахим организацийĕсенче оборона значок нормисене пайăс [illegible] лайăх туса пыраççĕ. Ку вăл [illegible] колхозниксем оборона ĕçне вĕренни [illegible] лайăх [illegible].

[illegible] Осоавиахим организацийĕсене те [illegible] кирлĕ пек пулса пымасть. Кив Пуйанкасси, Нушкасси, Тойсирен [illegible] пуç организацисенче халĕ те Осоавиахим билечĕсене улăштарса пĕтермен.

[illegible] билечĕ Осоавиахим организацийĕн йапăх ĕçлени комсомол райкомĕ [illegible] хушшинче ĕçлессине çителĕксĕр организацилĕнинчен килет. Районра 515 комсомолецран 374 комсомолец кăна Осоавиахим членĕнче тăраççĕ. Осоавиахим райсовет пленумĕн членĕсем П. Петров, П. Тихăнăв, Т. Сымокина йулташсем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек туса пымаççĕ.

Ревизи комиççи ĕçлемест. Осоавиахимăн районри советне çулталăк хушшинче пĕрре те ревизи туман. Халĕ те ревизи комиççи председателĕ П. Сергейĕв, членĕсем П. Краснов, Христофорăв йулташсем ревизи тума шутламаççĕ.

В. Илйин.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре улшăну çук

Улакасси йалсоветĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тăваттăмĕш квартала та улшăну тăваймарĕç. Тăваттăмĕш квартал вĕçне çитсе тăтăмăр: плана 43,3 процент çеç тултарнă.

Уйрăмăнах йединоличниксем йĕвĕпе пухмали нумай йулнă. Колхозниксем страховкă тата налогсен укçисене парса татнăпа пĕрех. Анчах йединоличниксем йĕвĕпе йалхуçалăх налогĕ 3 000 тенкĕ пухăнмасăр йулнă. Сăмахран, Ронгă Уйкассинчи Владимир Николайĕвран иртнĕ çулхи йалхуçалăх налогне 208 тенкĕ шыраса илеймен. Вăл иртнĕ çулхи культсбор укçине те 158 тенкĕ тÿлесе татман. Тури Уйкассинчи Александрăв Иван çĕвĕ çĕлесе укçа нумай илет пулсан та иртнĕ çулхи культсбора 158 тенкĕ тÿлемен.

Самообложени укçине пухас ĕç питех те начар пырат. Пĕтĕмпе самообложени укçи 4 500 тенкĕ пухмала пулсан, ку тарана çитсе те 2 000 тенкĕ кăна пухнă.

Йалсовечĕле займ илме 3 030 тенкĕлĕх çыранна. Анчах займ укçи пухасси питĕ начар пырат. Халĕ 3,9 тенкĕ кăна пухнă. Çĕнĕ Уйкассинчи колхозра займа 700 тенкĕлĕх çырăнса укçа 30 тенкĕ кăна тÿленĕ.

Йединоличниксен лашисем çине хунă налогсене йалсовечĕпе 8 пин тенкĕ пухмала пулнă пулсан, пурĕ те 2 500 тенкĕ кăна пухнă. Хăшпĕр йединоличниксем налог укçине пĕр пус та тÿлемен.

П. Комиссарăв.

Тĕплĕн ăнлантарса паратпăр

ТĂВАЙ. Амалăх йалĕнче массăлла-ăнлантарула ĕçсене Верховнăй Советсен суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче туса пынă пекех лайăх йĕркеленĕ. Агитатăрсем уйрăм килсенче пулса ăнлантарса параççĕ. Кашни агитатăр çумне 15 хуçалăх çирĕплетнĕ. Инструктăр-контролер В. Е. Чайкин йулташ агитатăрсемпе перепис ыйтăвĕпе консультацисем иртерет.

Епĕр перепиçе пур йенчен те лайăх иртерме пултаратпăр. Халăх перепиçĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса паратпăр. Перепис кадрĕсене шанчăклă çынсене суйланă.

Н. Пирогов.

КИТАЙРИ ВӐРҪӐ

(Чунцинран тата Шанхайран ТАСС корреспонденчӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх)

Центр Китайра

Иочжоуран виҫӗ километр кӑнтӑр йеннерех вӑйлӑ ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ. Ҫавӑн пекех Иочжоуран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех, Сињцзйан шывӗн ҫурҫӗр ҫыранӗнче, ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Йапони ҫарӗсем ҫав сектӑрта китайӗцсен позицийӗсем ҫине атакӑлама хӑтланса пӑхнӑ, вӗсен атакине китайӗцсем ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Йапонӗцсен пысӑк ҫухатусем пулнӑ. Хубей провинцин ҫурҫӗр пайӗнче Йапонин Ҫуйчжоура тӑракан гарнизонне Китай ҫарӗсем хупӑрласа илнӗ. Йапонӗцсен иншањрен (Хањкоуран ҫурҫӗререх) тухнӑ ҫарӗсем хӗвеланӑҫнелле кайсан, Китай ҫарӗсене хирӗҫ пулнӑ хыҫҫӑн, вӗсен ирӗксӗрех кайала чакмала пулнӑ.

Нањчаипа Цзуцзйан хушшинчи чукунҫулӑн ҫурҫӗр участкинче ҫӗмӗрсе тӑкнӑ ҫула Йапонин инженерла ҫарӗсем васкавлӑн йусаса йӗркене кӗртеҫҫӗ.

Йапонӗцсен тылӗнче, Шанхайран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерех, Китай партизанӗсем Йапони ҫарӗсемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Чаншупа Тайцан хушшинчи районра Китай партизанӗсем йапонӗцсен 200 ҫынран тӑракан отрйадне пӗтерсе тӑкнӑ.

Кӑнтӑр Китайра

Кантонран кӑнтӑрарах ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Декабӗрӗн 24-мӗшӗнче Китай ҫарӗсем пӗр кун ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Цзенчен хулине йышӑннӑ пулнӑ. Йапонӗцсем, пысӑк ҫухатусем туса, кайала чакнӑ. Ҫапах та, ҫӗнӗрен пысӑк вӑй пырса ҫитнӗ хыҫҫӑн, йапонӗцсем Китай ҫарӗсене вӑл хуларан хӗссе кӑларнӑ. Хальхи вӑхӑтра ҫапӑҫусем хула таврашӗнче пулса иртеҫҫӗ.

Декабӗрӗн 25-мӗшӗнче Китайӑн темиҫе отрйачӗсем йапонӗцсен Кантон хулин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ таврашӗсенчи позицийӗсем ҫине атакӑланӑ. Вӑл ҫапӑҫусенче йапонӗцсем пӗр пин салтак вилнӗ.

Лунцзйан тата Тамшуй (Кантонран кӑнтӑр тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ йеннерех) ҫывӑхӗнче ҫапӑҫусем ҫӗнӗрен пуҫланса кайнӑ.

Ҫурҫӗр Китайра

Шањси провинцин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче йапонӗцсен отрйачӗ, декабӗрӗн 18-мӗшӗнче Хецзињрен тухнӑскер, хуларан ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерех китайӗцсен позицийӗсем ҫине атакӑланӑ. Ҫичӗ сехет ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн йапонӗцсем кайала чакнӑ, вӗсен пысӑк ҫухатусем пулнӑ.

Йапонӗцсем хӑйсен Шањси провинцин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнчи гарнизонӗсене васкавлӑн ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Йапони ҫарӗсене ҫурҫӗр Китайран Манчжурине илсе пыраҫҫӗ. Ҫак йулашки ерне хушшинче Тањцзин витӗр ҫарсемпе тата вӑрҫӑ хатӗрӗсемпе 50 ҫар составӗ Манчжурине ӑсатнӑ.

Декабӗрӗн 26-мӗшӗнче Йапонин 15 самољочӗ Гуандун провинцинче Нањсӳн, Инде хулисем тата Цзйанси провинцинче Сињфын хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Нањсӳн ҫине 60 бомбӑ пӑрахнӑ.

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пӗлтернисем тӑрӑх)

Хӗвелтухӑҫри фронт

Испанин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин официаллӑ сводкинче пӗлтернӗ тӑрӑх, декабӗрӗн 27-мӗшӗнче Тремп сектӑрӗнче пӑлхавҫӑсем халиччен пекех вӑйлӑ атакӑсем тунӑ, вӗсене Италипе Германин пит нумай самољочӗсем пулӑшса тӑнӑ. Интервентсем хӗсние республиканӗцсем чарса тӑраҫҫӗ. Республиканӗцсен зенитлӑ артиллерийӗ фашиссен виҫӗ самољотне персе антарнӑ.

Сегре сектӑрӗнче республиканӗцсен позицийӗсем ҫине атакӑ тума Италин тӑватӑ дивизине тӑратнӑ, вӗсене авиацине артиллери тата танксем пулӑшса пыраҫҫӗ. Интервентсене Солерас тата Аспа йатлӑ пунктсене ҫитме май килнӗ. Ҫапӑҫусенче итальйанӗцсене питӗ пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

Республиканӗцсем Германин «Мерседес» йатлӑ ҫӗмӗрнӗ танкне тытса илнӗ.

Республиканӗцсен авиацийӗ темиҫе хутчен пӑлхавҫӑсен позицийӗсем ҫине ӑнӑҫлӑн пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура Германин «Мессершмидт» самољотне персе антарнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫу хыҫҫӑн республиканӗцсен самољочӗсем хӑйсен вырӑнне чиперех ҫитсе ларнӑ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем пулман.

Авиаци ӗҫӗсем

Италипе Германи авиацийӗ декабӗрӗн 26-мӗшӗнче Куенкӑ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Декабӗрӗн 27-мӗшӗнче интервентсен самољочӗсем Игуаладӑ, Таррагонӑ, Валенси ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Барселонӑ ҫине икӗ хутчен пырса бомбӑсем пӑрахнӑ, республиканӗцсен зенитлӑ артиллерийӗ итальйанӗцсен пӗр самољотне сийенленӗ.

БАРСЕЛОНӐ, декабӗрӗн 28-мӗш. Декабӗрӗн 26-мӗшӗнче итальйанӗцсен 60 самољочӗ паллӑ генерал Москардо йертсе пыракан сектӑрта тӑхӑр сехетрен пуҫласа вуниӗр сехете ҫитиччен хӑйсен позицийӗсем ҫине персе тата бомбӑсем пӑрахса тӑнӑ.

(ТАСС).

Чехословакире коммунисла партине ӗҫлеме чарса лартнӑ

ПРАГӐ, декабӗрӗн 28-мӗш. Чехословакин шалти ӗҫсен министерстви коммунисла партине салатса йарасси ҫинчен декрет кӑларнӑ. Вӑл декрет тӑрӑх парламентӑн 25 коммунис-депутатне, сенатӑн 13 депутатне тата Чехипе Моравинчи хуласемпе йалсенчи муниципалитетсен тата ытти организацисен членӗсене-коммуниссене пурне те депутат мандачӗсӗр тӑратса хӑвараҫҫӗ. (Словакире тата Закарпат Украининче ку ӗҫе туса иртернӗ те ӗнтӗ). Коммунисла организацисен тата клубсен пурлӑхӗсене пӗтӗмпех конфискацилеҫҫӗ.

Компарти—пӗртен-пӗр массӑлла политикӑлӑ организаци пулнӑ (парламентӑн иртнӗ суйлавӗнче компартишӗн пӗр мӗлйун ҫын ытла сасӑланӑ), ҫентӑбӗрти йӑвӑр кунсенче республикӑн никама пӑхӑнса тӑманлӑхне фашисла агрессӑрсенчен хӳтлекенсен ретӗнче ҫирӗп тӑнӑ пулнӑ. Хаљ правительствӑ хаҫачӗсем пурте—„Венков“ хаҫатран пуҫласа „Прагер прессе“ хаҫат таранах—компартине хирӗҫле елеклесе ҫырнӑ статйасем пичетлесе кӑларнӑ.

Фашисла пичет компарти влийанийӗнче тӑракан организацисене пурне те,—профсойузсене, спорт, кооперации организацисене (вӑл организацисенчен чи вӑйли тата пысӑк влийани сарни „вчела“ йатлӑ кооперацилӗ организаци), ҫавӑн пекех, ССРС туссен общественине тата Чехословакипе ССРС хушшинче економикӑпа кулљтурӑ ҫыхӑнӑвӗн обществисене салатса йама хушать.

Компартине салатса йанӑ хыҫҫӑн Чехословакире Беранӑн „Национальнӑй пӗрлӗхӗ“, „ӗҫ партиӗ“ тата Кундтӑн нимӗҫ фашисӗсенчен тӑракан партийӗсем кӑна ӗҫлемелле пулаҫҫӗ.

(ТАСС).

Ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ

ВӐРМАР. Чӑрӑш Ҫырма йалсовечӗ Пӗтӗм Союзри халӑх переписне лайӑх хатӗрленсе кӑтартулӑн иртерес тӗлӗшпе Кӗлкеш йалсовечӗпе ӑмӑртӑва тухнӑ. Чӑрӑш Ҫырма йалсовечӗ илнӗ обйазательствӑсене лайӑх пурнӑҫа кӗртсе пырать. Счетчиксем вӗрентсе хатӗрленӗ. Халӗ массӑлла-ӑнлантарулӑ ӗҫ сарӑлса пырать. Перепис кӗтесӗ организациленӗ. Вулав ҫурчӗ ҫумӗнче перепис ыйтӑвӗпе йатарласа икӗ номӗр стена хаҫачӗ кӑларнӑ.

Верховнӑй Советсен суйлавӗсенче ӗҫленӗ агитатӑрсем перепис мӗнле йӗркепе иртмелли ҫинчен тата переписҫе мӗншӗн иртерни ҫинчен халӑха лайӑх ӑнлантарса параҫҫӗ.

Счетчик Г. Никифӑрӑв.

Германире йеврейсене погром туни

Фашисла варвӑрсем йеврейсен пурӑнмалли ҫурчӗсемпе магазинӗсене пӗр хӗрхенӳсӗр ҫӗмӗрсе тӑкса, вӗсене тискеррӗн асаплантараҫҫӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Берлинри урамсенчен пӗринче йеврейсен ҫӗмӗрсе тӑкнӑ магазинӗ.

(ТАСС фотохроники).

ССР Союзӗн ордӗнӗсене, „За отвагу“ тата „За боевые заслуги“ медальсене пани

Декабӗрӗн 27-мӗшӗнче ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин йулташ Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗн наградӑланӑ бойецӗсене, командирӗсене тата политработникӗсене ордӗнсем панӑ.

Полковник К. И. Провалов тата красноармейец Й. С. Чуйков йулташсем Ленин ордӗнӗсем тата Совет Союзӗн Геройӗ йатне пани ҫинчен грамӑтӑсем илнӗ. Вӗсене иккӗшне те боевой заданисене кӑтартулӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата Хасан кӳлли районне сыхланӑ ҫӗрте геройлӑх кӑтартнӑшӑн наградӑланӑ.

Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫусен ытти участникӗсем те Ленин ордӗнӗсем, Хӗрлӗ Йалав тата Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр ордӗнӗсем илнӗ. Вӗсен хушшинче—капитансем Ласкин, Матвейӗв, Бриллиантӑв, Йемелйанӑв йулташсем, 3-мӗш рангри ҫар врачӗ Винникӑв йулташ, лейтенант Маркунов йулташ, кӗҫӗн политрук Базейӗв йулташ, красноармейӗцсем Дылгин, Кособоков, Кобӑлков, Айнабеков, Пронин т. ыт. йулташсем.

Унтан Михаил Иванович ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗпе наградӑланӑ Хӗрлӗ Ҫар бойецӗсен, командирӗсен, политработникӗсен ушкӑнне «За отвагу» тата «За боевые заслуги» медальсем панӑ.

Ҫавӑн пекех, „Родина“ самољотӑн материальнӑй ҫаӗсене тӗплӗн хатӗрленӗшӗн тата вӑл самољотӑн вӗҫевне организацилес йенӗпе кӑтартулӑ ӗҫленӗшӗн наградӑланӑ инженер А. М. Козлов йулташ, „Родина“ самољота шыраса тупса унӑн екипажне илсе тухас тӗлӗшпе хӑйне хӗрхенмесӗр ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн наградӑланӑ комбриг А. П. Ионӑв йулташ та наградӑсем илнӗ. Газогенераторлӑ автомашинӑсен чупӑвӗн участникне—водителе, Сталин йачӗпе тӑракан автосавӑт работникне Н. П. Иеромин йулташа «Знак Почета» ордӗнӗ, авточупӑвӑн механикне К. Н. Савин йулташа ССРС Верховнӑй Советӑн хисеплӗ грамӑтине панӑ.

М. И. Калинин йулташ наградӑ илнӗ йулташсене ӑшшӑн сывлӑх сунса саламланӑ.

(ТАСС).

Совет Союзӗ тӑрӑх

●● Ленинградри С. М. Кирӑв йачӗпе тӑракан аш-какай комбинатне хута йанӑранпа декабӗрӗн 29-мӗшӗнче 5 ҫул тултарчӗ. Пилӗк ҫул хушшинче комбинат 4.843 пин пуҫ выльӑх пусса аш-какай туса кӑларнӑ.

Петербургра 1912 ҫулта 392 пин пуҫ выльӑх пуснӑ пулнӑ. Кирӑв йачӗпе тӑракан аш-какай комбинатӗнче 1938 ҫулта кӑна ун чухнехинчен виҫӗ хут ытларах аш-какай кӑларнӑ. Комбинат ҫулталӑк программине нойабӗрӗн 2-мӗш тӗлне тултарнӑ, вӑл планран иртерсе 50 мӗлйун тенкӗлӗх ытла продукци панӑ.

●● Декабӗрӗн 28-мӗшӗнче, Николайӗвскри Марти йачӗпе тӑракан судостроительнӑй савӑт причалӗнчен Арктикӑ флочӗн гиганчӗ—„Лазарь Каганович“ пӑрҫӗмрев тухнӑ. Унтан вӑл Николайӗвскри суту-илӳ портне тӑрса ҫӗркӑмракӗ тийенӗ. Пӑрҫӗмрен 700 тоннӑ ҫӗркӑмракӗ тийенӗ хыҫҫӑн Кавказ ҫыранӗсем тӑрӑх тухать. Батуми районӗнче 38 сехет хушши контрольлӗ ҫӳрев туса иртерет. Пӑрҫӗмренӗн екипажӗ 108 ҫынран тӑрать, вӗсенчен 7-шӗ орденоносӗцсем.

●● Ворошилӑвскра (Орджоникидзе крайӗ) крайри аероклуба уҫнӑ. Предприйатисенчи стахановӗцсем тата студентсем производствӑран татӑлмасӑр вӗҫев ӗҫне вӗренеҫҫӗ. Крайри ытти аероклубсенче те занятисем пуҫланнӑ.

●● Свердловскри медицинӑ институтӗнче ҫар-медицинӑ академине вӗренме йама студентсене суйласа илес ӗҫе туса ҫитернӗ. Кӑҫал институтран вӗренсе тухакан 108 ҫамрӑк патриота ҫар-медицинӑ академине йараҫҫӗ.

(ТАСС).

Пысӑк кӑмӑлпа хапӑл туса йышӑнчӗҫ

ШӐНКӐРТАМ, декабӗрӗн 29-мӗш. (Телефон тӑрӑх). Район центрӗнчи рабочисемпе служӑщисем декабӗрӗн 29-че ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ тата Професҫилӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Тӗп Совечӗ ӗҫ дисциплинине йӗркелес, государствӑн социальнӑй страховани практикине лайӑхлатас тӗлӗшпе йышӑннӑ постановленине коллективлӑн радио тӑрӑх итлерӗҫ. Постановленине итлеме 135 ҫын ытла пухӑннӑ.

Рабочисемпе служӑщисем постановленине тулли кӑмӑлпа хапӑлласа йышӑнчӗҫ. Вӗсем малашне прогулсем тӑвассине пӗтерме, ӗҫкунӗнче туллин ӗҫлеме, ӗҫ дисциплинине пӑсакансемпе вӑйлӑн кӗрешсе пыма сӑмах пачӗҫ.

Кужикӑв.

Хӗл сӑввисем

Кӗрекере пайан Йакур
Ларать кӗрнеклӗн йурласа.
Илемлӗ, аслӑ ҫӗнӗ пӳрт
Хӗлле пек ҫутӑ та таса.
Йуман сӗтелӗ авӑнать
Тем-тӗрлӗ ҫимӗҫ айӗнче.
Ҫуми хаваслӑх курӑнать
Тулли, хӗрелнӗ питсенче.
Чашлать йурланӑн сӑмавар,
Йӑлтӑртатать анис улма.
Тултар-ха, тусӑмҫӑм, тултар:
Пуҫлар телейлӗ пурӑнма!
Хӗл ситрӗ. Чунӑм хӗпӗртет.
Йур ҫурӗ темӗн ҫӳлӗшӗх.
Пайан кӗрет ҫӗнӗ пӳрте
Пӗр шутлӑ, ӗмӗтлӗ ҫемйе.

* * *

Тӳпе тӑп-тӑрӑ, йанкӑр,
Ҫӗр пичӗ шап-шурах.
Чӑсрах, йулташ, вӑрам та,
Кайатпӑр сунара.
Ҫанталӑкӑн илемӗ
Йумахри пек пайан.
Тӑрать, хӑйпе киленмӗн,
Ҫавал йенчи вӑрман.
Кун-ҫулӗ вӑрӑм, пысӑк.
Утатпӑр ӗмӗтпе
Мулкач йӗррийӗ хыҫҫӑн,
Телей йӗрленӗ пек.
Ҫут ӗмӗтӗн ҫуначӗ—
Хавас шухӑ чӗрем;
Пӑхсассӑн курӑнаҫҫӗ
Таҫти-таҫти йалсем.
Ҫара вӑрман пит тӗслӗн
Ҫунса йӑлтӑртатать.
Пит шӑппӑн, ура вӗҫҫӗн,
Сив хӗл мучи утать...
Ҫывхарчӗ те—чуптурӗ,
Хӗретрӗ питӗме.
Ҫунать тӑпӑрка йурӗ,
Ҫунать те—ирӗлмест.
Ҫиҫет хаваслӑ кӑмӑл,
Чӗрем сиксех ташлать.
Алра пит ӑшӑ ҫӑмӑл,
Мулкачӑ шуралать.

А. Ваҫилйӗв.

Шӑратӑр, тантӑшсем, йурра...

Чунтан саватпӑр ҫӗршыва:
Унта кӑна чӑн ырӑ пурнӑҫ.
Унта ҫаҫ пурӑнма аван,
Кам ӗлӗк йӑвӑр хурлӑх курнӑ.

Ӗҫре хӑватлӑн ҫӗклеме
Пире ӑс пачӗ хӑй ҫулпуҫӗ.
Кулма, савнашкӑн, вӗренме
Ӑҫта та ирӗншӗн ҫул уҫӑ.

Шӑратӑр, тантӑшсем, йурра,
Хӗвел патне ҫити вӑл йухтӑр,
Хулийӗ, йалӗ ҫӗршывра
Вӑл йурӑна пӗр хапӑл тутӑр.

Д. Йегорйӗв.

Самообложени укҫипе

Йермошкинӑ йалсовечӗ (Вӑрнар р.) самообложени укҫипе йӗркелӗн усӑ курать. 1937 ҫ. ҫак укҫапа йал хушшинче виҫӗ кӗпер хывнӑ. 1939 ҫулта «Упа ҫырми» урлӑ кӗпер хываҫҫӗ. Ку кӗпере тума 13 пин тенкӗ укҫа кайать.

М. Капитонӑв.

Республикӑри шашкӑ турнирӗнче

Кӗҫӗр ирхине шашкӑ турнирӗнче йуланӑ партисене выљаса пӗтерчӗҫ. Студенецкий Жидковран, Воскресенский Хохловран выљаса илчӗҫ. Федотӑвпа Мишуткин партийӗ никам та ҫӗнтерейменнипе пӗтрӗ.

Ҫаҫхине ҫиччӗмӗш тур пулса иртрӗ. Малти ретре пынӑ Хохлов пайан иккӗмӗш партийе Федотӑва выљаса йачӗ. Студенецкий Ивановран, Воскресенский Жидковран выљаса илчӗҫ. Ив. Ижейӗн Мишуткинпа выљанӑ чух хӑйне йӑвӑр положенинчен илемлӗ комбинаци туса кӑларнипе вӑййа никам ҫӗнтермелле мар турӗ.

Ҫичӗ тур хыҫҫӑн малти ретре Никитинпа Воскресенский пыраҫҫӗ.

И. Ижейӗв.

Кӗскен

●● ССРС Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссарначӗ ҫумӗнче физкультурӑ, йенӗпе йалан ӗҫлекен совет тунӑ. Вӑл совет физкультурӑна, туриссӑма, альпинисӑма врачсем йенчен тӗрӗслесе тӑрассине организацилет, пульницӑсенче, санаторисенче, поликлиникӑсенче, каву ҫурчӗсенче сывлӑха ҫирӗплетнӗ ҫӗрте усӑлӑ физкультурӑна сарса пырать, ҫак йенӗпе ӑслӑлӑхпа тӗпчев ӗҫӗсене организацилет. Совет составне физкультурӑ йенӗпе ӗҫлекен 26 специалис кӗртнӗ.

●● Вӗренекенсен хӗллехи каникулӗ вӑхӑтӗнче—йанварӗн 3-мӗшпе 8-мӗш хушшинче—РСФСР-ӑн крайсемпе облӑҫсенче пуринче те учителсен районри канашлӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Учителсем иккӗмӗш ҫурҫул программисемпе тата уйрӑм предметсене вӗрентес ӗҫри пӗр-пӗрин опычӗсемпе паллашаҫҫӗ.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи искусствӑ ӗҫӗсен комитечӗ И. Д. Шадр скульптӑра А. М. Горькин пысӑк статуине тума хушнӑ, ӑна туса пӗтернӗ хыҫҫӑн аслӑ писатель йачӗпе тӑракан Мускаври художественнӑй театр фойине лартаҫҫӗ. А. М. Горькин фигури 2,5—3 метр ҫӳлӗш пулать, ӑна шурӑ мрамӑртан тӑваҫҫӗ.

Тӗрӗсленнӗ заметкӑсем тӑрӑх

„Куллен кирлӗ таварсем“

Албахтинӑ йалповӗн лавкисенче (Трак р.) ҫак кӗркунне вӑхӑтӗнче краҫин пулман, сахӑр, супӑнь, табак ҫителӗксӗр пулнӑ, тесе ҫырнӑччӗ корреспондент.

Тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, заметкӑра ҫырнисем тӗрӗс пулнӑ. Албахтинӑ лавкинче ответсӑр ӗҫленӗшӗн икӗ продавеца вырӑнтан кӑларнӑ. Хальхи вӑхӑтра ку лавкара куллен кирлӗ таварсене ҫителӗклӗ сутаҫҫӗ.

Врач канашӗсем

ШӖРӖЛЧЕНСЕМ ҪИНЧЕН

Шӗрӗлченсемпе чирлисем халӑх хушшинче сахал мар. Нумайӗшӗ вӗсенчен тухтӑр патне каймасӑрах, аптекӑран йе урӑх ҫӗртен „пӳсӗр вӑрри“ илсе ҫинипе тӳрлетме тӑрӑшаҫҫӗ.

Тӗрӗс-ши вӑл ҫапла туни? Шӗрӗлчене вырӑсла глиста теҫҫӗ. Ҫавӑн пек глистасем ҫын пыршинче тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Лентӑлӑ глистасенчен пӗри (цепень вооруженный) 2—3 метр вӑрӑмӗшне ҫитме пултарать. Ку глиста ҫынна пуринчен ытла пӗҫермесӗр йе начар пӗҫерсе ҫинӗ чирлӗ сысна какайӗ урлӑ йерет. Тепӗр тӗрлӗ, ҫавӑн майлӑрах лентӑлӑ глиста ҫавнашкалах начар пӗҫерсе ҫинӗ чирлӗ ӗне йе вӑкӑр какайӗ урлӑ йерет.

Виҫҫӗмӗшӗ (широкий лентец) чӗрӗ пулӑ урлӑ йерет. Унтан, ҫаврака глистасенчен аскаридӑ текеннин ҫӑмартисем вараланнӑ пахчаҫимӗҫӗсем ҫивче ӳссе пыраҫҫӗ. Тасатмасӑр ҫисен вӗсем ҫын пыршине кӗрсе кайаҫҫӗ те, аскаридӑ хунама пуҫлать. Острицӑ текен вӗтӗ глистасем тула тухмалли вырӑна таса тытмасан, ӑлӑпа тӗкӗнсе кайран урӑх йапала тытсан, тата шӑнасем урлӑ йереҫҫӗ. Ку чирпе пуринчен ытла ачасем чирлеҫҫӗ. Кусемсӗр пуҫне ехинокок пур. Вӑл пуринчен ытла йытӑсенчен йерет. Ҫавнашкалах унпа ӗнесем те, сыснасем те час чирлеҫҫӗ. Ехинококпа чирленӗ йытта ҫӑмӗнчен ачашласанах чир йертме пулать. Пачлах ӗнтӗ, унпа чирленӗ выльӑх ашне ҫисен ехинокок часах йерет. Ехинокок пуринчен ытла ҫынӑн пӗверӗнче пулать. Тепӗр чух ӳпкере, шӑмӑра, мимере, чӗрере тата ыт. ҫӗрте пулма пултарать.

Шӗрӗлченсем организмшӑн йут, сийенлӗ йапала пулса тӑраҫҫӗ. Лентӑлӑ тата ҫаврака глистасем ҫын йувне ӗмсе пурӑнса малокровине йараҫҫӗ, аскаридӑ текеннисем куҫса ҫӳреме йуратнипе мӑн хырӑма лексе хӑстарма пултараҫҫӗ, хырӑма карӑнтараҫҫӗ, хӑш чух ыраттараҫҫӗ. Шӗрӗлченсем нумай пулсан пыршӑ питӗрӗнсе ларнипе ҫын тула тухайми те пулать. Ун пекки кӑҫал Шупашкар пульницинчех пулнӑ. Ҫыннине операци туса кӑна тӳрлетнӗ. Острицӑсем пуринчен ытла тула *тухмалли вырӑнтан* кӗҫӗтнипе аптӑратаҫҫӗ. Ачасем вара ҫывӑраймасӑр аптӑраҫҫӗ, шуралса кайаҫҫӗ. Ехинокок шыҫӑ пек ӳсет.

Ҫакӑнтан лайӑх курӑнать ӗнтӗ, пур глистасене те „пӳсӗр вӑррипе“ хӑваласа кӑларма ҫук. Вӗсене кӑларма кашнинех хӑйне ӑрасна емел кирлӗ. Унсӑр пуҫне мӗнле кӑлармаллине те пӗлес пулать (малтан йе кайран тула кӑларакан емел ӗҫесси, ӑшӑ вырӑна ларасси, апатҫимӗҫ тата ыт.). Ехинокок текеннине „пӳсӗр вӑрри“ тем чул ӗҫсен те кӑларма ҫук. Кунта операци кӑна пулӑшать. Паллӑ ӗнтӗ, шӗрӗлченсене тухтӑр йе хвершӑл патне кайса кӑтартмасӑр кӑларма тытӑнма кирлӗ мар, вӗсен канашӗпе, вӗсем кӑтартса пынипе тытӑнсан кӑна ӗҫ ӑнӑҫлӑ пулать, мӗншӗн тесен, малтан мӗнле шӗрӗлчене пӗлес пулать, унтан мӗнле кӑлармаллине ыйтса пӗлмеле.

Шӗрӗлченсем тепӗр чух тулала тухаҫҫӗ. Кун пек чух лабораторинче сӑнаса мӗнле шӗрӗлчене часах пӗлеҫҫӗ.

Шӗрӗлченсенчен сыхланма пӗлме нумай кирлӗ мар. Чӗрӗ какайсенчен, пиҫмен пулӑсенчен (пуринчен ытла ҫӑрттансенчен, шампасенчен) йаланах сыхланас пулать. Йытӑ-кушаксемпе ытлашши йавӑҫас пулмасть, вӗсенчен пуринчен ытли ачасене сыхлама тӑрӑшмала. Пахча-ҫимӗҫсене лайӑх тасатмасӑр тытса ҫиме кирлӗ мар. Ҫиме ларас чух аласене йаланах супӑньпе ҫӑвас пулать, ахаль чухне те хӑвна таса тытма тӑрӑшмала. Астӑвас пулать, тасалӑх кирек мӗнле чиртен те хӑтарать. Таса мар ҫӗрте шӗрӗлченсем кӑна мар, микробсем те ӑнӑҫлӑн хунаҫҫӗ.

Выльӑх пуссан ӳпки-чӗрисене, йаланах пӑхас пулать. Унта ҫутӑсарӑ шывлӑ хӑмпусем пулсан (ехинокок), ҫиме йурамасть, ҫунтарса йамала йе ҫӗре алтса чикмелле. Кун пек пулсан вӑл какайа часчасах сыснасене йе йытӑсене параҫҫӗ. Капла туни пысӑк йӑнӑш, мӗншӗн тесен ӑна ҫинипе сысна йе йытӑ чирлет, вара кайран ҫынсене йертме пултарать.

Врач К. Пайраш.

Отвечайлӑ редактӑр Н. М. ҪЕМЕНАВ.

ВӐРНАРТИ ФОСФОРИТ САВӐТНЕ ОПЫТЛӐ ТЕХНИК-СТРОИТЕЛ КИРЛӖ.

Ӗҫукҫи килӗшӳ тӑрӑх.

ХВАТЕР ПАРАҪҪӖ.

ДИРЕКЦИ.

Йалхуҫалӑх снабженин Канаш хулинчи базинче ҫакӑн пек минерал ҫӑвӑхӗсем пур:

Минерал ҫӑвӑхӗсен йачӗ	Хакӗ (пӗр тоннӑшӑн)
Аммиак селитри	223 тенкӗ
Аммони сульфачӗ	146 т. те 08 п.
Суперфосфат	89 „ 65 „
Кали тӑварӗ	100 „ 32 „
Сильвинит	86 „ 93 „

Мӗн чухлӗ кирлӗ—ҫавӑн чухлӗ илме пулать.

ЧӐВАШПРОМСОЙУЗА ВАСКАВЛА КИРЛӖ:

економист-коньюнктурист,
бухгалтӗр-економист,
тир-тавар йенӗпе специалист,
культурӑ пайӗн консультанчӗ.

Чӑвашпромсойуз.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 678 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР., заказ № 896 Ф. Б. 60Х84 в. ш.